24-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 10 пус.

1941
МАРТ
19
ЮНКУН
65 (5780) №

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

Чӑваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ
ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН,
ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ ҪОВЕЧӖН
ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН
ХАҪАЧӖ.

Колхозсенчи ӗҫ тухӑҫлӑхне хӑпартмалли хӑватлӑ май

Партин XVIII съезчӗн решенийӗсене пурнӑҫа кӗртсе пырса, пирӗн республикӑри колхозсем организаципе хуҫалӑх тӗлӗшӗнчен чылаях ҫирӗпленсе тӗрекленчӗҫ. Колхозсен обществӑллӑ харпӑрлӑхӗ ҫирӗппӗн аталанса пырать. Сталинла виҫҫӗмӗш пятилетка ҫулӗсенче тырпул тухӑҫне хӑпартас, колхозсенче обществӑллӑ выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес, обществӑллӑ фондсем тӑвас тата колхозлӑ хресченсен пӗтӗм материаллӑ-культурӑллӑ пурнӑҫне ҫӗклес тӗлӗшпе пысӑк ӳсӗмсем тунӑ.

Юлашки ҫулсенче пирӗн партипе правительство социализмлӑ ялхуҫалӑх ыйтӑвӗсем тӑрӑх пит те паллӑ решенисем йышӑнчӗҫ. Колхозсенчи обществӑллӑ ҫӗре салатса пӗтересрен сыхламалли мерӑсем ҫинчен, колхозсенче обществӑллӑ выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫе вӑйлатмалли мероприятисем ҫинчен, ялхуҫалӑх продуктисен заготовкипе закупкине иртерес политикӑри улшӑнусем ҫинчен йышӑннӑ постановленисем—Ленин-Сталин партийӗ тата совет правительстви колхозлӑ строя аталантарса пырассишӗн мӗнтери хытӑ тӑрӑшнине кӑтартса паракан историллӗ документсем.

Ҫак постановленисене пурнӑҫа кӗртсе пынӑ май пирӗн колхозсенче ӗҫ дисциплини нумай ҫирӗпленчӗ, колхозниксен ӗҫ тухӑҫлӑхӗ чылай ӳсрӗ. Колхозниксем обществӑллӑ хуҫалӑха пур енӗпе те ӳстерсе пырассишӗн, колхозӑн экономикӑллӑ хӑватне ҫӗклессишӗн, государство ӗмӗрлӗхе ҫирӗплетсе панӑ ҫӗрпе лайӑхрах усӑ курассишӗн, унтан татах та нумайтарах тупӑш илессишӗн ытларах та ытларах тӑрӑшаҫҫӗ. Колхозниксем партипе правительство кӑтартса панӑ ҫулпа хастарлӑн пыраҫҫӗ, социализмлӑ ялхуҫалӑхӗнче ҫӗнӗрен те ҫӗнӗ ҫӗнтерӳсем тӑваҫҫӗ.

Икӗ эрне каярах ялхуҫалӑхӗнче малта пыракансен республикӑри канашлӑвӗ пулса иртрӗ. Ҫак канашлу Чӑваш республикинчи колхозсен иртнӗ ҫулти чаплӑ ҫӗнтерӗвӗсене демонстрацилесе тата ӗҫри опытсене кӑтартса пачӗ. Канашлу тырпул тухӑҫне тата выльӑх-чӗрлӗх продуктивлӑхне хӑпартас тӗлӗшпе пысӑк обязательствӑсем илчӗ. Паллах, ялхуҫалӑхӗнче малта пыракансен опычӗсемпе кашни колхоз производствинче анлӑрах усӑ курсан, ялхуҫалӑх культурисен тухӑҫне тата выльӑх-чӗрлӗх продуктивлӑхне пӗтӗм республикипе темиҫе хут ҫӳлерех хӑпартма пулать.

Ялхуҫалӑхӗнче малта пыракансен республикӑри канашлӑвӗ пирӗн республикӑра та, Украина СС Республикинчи пекех, ялхуҫалӑх культурисен тухӑҫлӑхне тата выльӑх-чӗрлӗх продуктивлӑхне ӳстернӗшӗн колхозниксене ӗҫшӗн хушса тӳлесси ҫинчен постановлени кӑларма ыйтрӗ. Ҫакӑ—пирӗн республикӑри колхозсенче тӳрӗ кӑмӑлпа ӗҫлекен мӗнпур колхозниксен шухӑшӗпе ӗмӗчӗ. Пирӗн республикӑри колхозниксем, парти тата совет организацисем ыйтнине шута илсе, партин Центральный Комитечӗпе СССР Совнаркомӗ «Ялхуҫалӑх культурисен тухӑҫлӑхне тата выльӑх-чӗрлӗхсен продуктивлӑхне ӳстернӗшӗн Чӑваш АССР колхозникӗсене ӗҫшӗн хушса тӳлесси ҫинчен» постановлени йышӑнчӗҫ, ӑна паян эпир хаҫатра пичетлесе кӑларатпӑр.

Ҫак постановлениие пирӗн республикӑри колхозниксем пит те пысӑк хаваслӑхпа, производствӑллӑ тата политикӑллӑ хастарлӑха татах та ҫӳлӗ пусӑма хӑпартнипе кӗтсе илӗҫ. Ку постановлени колхозниксене ӗҫшӗн тӳлес ҫӗрте пулнӑ уравниловкӑна, обезличкӑна тата тӗрӗсмарлӑха пачах пӗтерсе хурать. Халӗ ӗнтӗ кашни колхозника ӗҫшӗн социализмлӑ принципсем тӑрӑх—унӑн ӗҫ хисепӗпе пахалӑхне шута илсе тӳлеҫҫӗ. Ҫӗнӗлле тӳлемелли йӗрке лайӑх ӗҫе ырлать. Тӳрӗ кӑмӑлпа ӗҫлесе, тырпул тухӑҫне тата выльӑх-чӗрлӗх продуктивлӑхне хӑпартмалли плана ытлашшипех тултарса, малта пыракан колхозниксем хӑйсен ӗҫӗшӗн центнер-центнерӗпе тырӑ, ҫӗршер литр сӗт, пӑчӗ-пӑчӗпе ҫӗрулми тата ытти ҫимӗҫсем илӗҫ. Халӗ ӗнтӗ малалла колхозниксем татах та хастарлӑрах, ӑнӑҫлӑрах ӗҫлеме пуҫлӗҫ, малта пыракансем ҫӗнӗ ҫӗнтерӳсем пантелле хыттӑнрах туртӑнӗҫ, юлса пыракансем — малта пыракансене хуса ҫитессишӗн кӗрешӗҫ.

Малта пыракан колхозниксене ӗҫшӗн тӳлес ҫӗрти тӗрӗсмарлӑх ҫакӑн пирки пулма пултарнӑ: ӗҫшӗн тӳленӗ чухне ӗҫлесе тунӑ ӗҫкунӗсен хисепне кӑна шута илнӗ, ӗҫӗн пахалӑхӗпе сахал интересленнӗ, ӗҫӗн юлашки результатне—ялхуҫалӑх культурисен тухӑҫлӑхне тата выльӑх-чӗрлӗхсен продуктивлӑхне шута илмен, пурне те пӗр пек тӳленӗ. Ун ҫинчен ҫак тӗслӗхсем те аван кӑтартса параҫҫӗ.

Элӗк районӗнчи «Комсомолец» колхозра икӗ бригада: пӗрине М. Иванов, теприне—И. Осипов юлташсем ертсе пыраҫҫӗ. Иртнӗ ҫулта ҫак бригадӑсем пӗр пек лаптӑк—113-шер гектар акса хӑварнӑ. Иванов юлташ бригади пӗтӗм лаптӑкран 1.654 центнер, Осипов юлташ бригади—1.078 центнер пухса кӗнӗ. Иванов юлташ бригади колхоза Осипов юлташ бригадинчен 576 центнер тӗштырӑ ытларах туса панӑ пулин те, ку бригадӑри колхозниксене лайӑх ӗҫленӗшӗн пӗр килограмм та хушса паман.

Ҫавӑн пекех Шупашкар районӗнчи «1-ое Мая» колхозра та. Кунта ҫиччӗмӗш бригада иртнӗ ҫулта вӑтам шутпа кашни гектартан 22,3 центнер тӗштырӑ пуҫтарса илнӗ. Виҫҫӗмӗш бригада икӗ хут сахалтарах—11,2 центнер кӑна пухса кӗнӗ. Анчах тӳлессе икӗ бригадӑри колхозниксене пурне те пӗр пек виҫепе тӳленӗ. Ҫапла вара начар ӗҫлекен бригадӑсем, звеносем тата уйрӑм колхозниксем малта пыраканнисемпе танах, е хӑшпӗр чухне ытларах та илнӗ.

Партин Центральный Комитечӗпе СССР Совнаркомӗ йышӑннӑ постановлени колхозниксен, колхозсен тата государствӑн интересӗсене уйрӑлми тачӑ ҫыхӑнтарса, пӗрлештерсе тӑрать. Ҫакӑ вӑл пирӗн тӑван ҫӗршывӑн, совет халӑхӗн малашнехи аталанӑвӗн, социализмлӑ государство хӑватне тӗреклетмелли пысӑк вӑй пулса тӑрать.

Ҫакна асра тытмалла: ӗҫшӗн ҫӗнӗ йӗркепе хушса тӳлесси ҫинчен йышӑннӑ постановленине пурнӑҫа тӗрӗс кӗртсе пыни кирлӗ. Вӑл чи малтан нормӑсемпе расценкӑсем тӑвассинче тивӗҫлӗ йӗркелӗх пулма кирлине пӗлтерет.

Колхозниксене ӗҫшӗн хушса тӳлемелли ҫӗнӗ йӗрке—колхоз хуҫалӑхне чечеклентерсе пымалли хӑватлӑ хӗҫпӑшал пулса тӑрать. Анчах ҫак йӗркене йышӑннипе ӗҫ хӑй тӗллӗнех малалла хӑвӑрт лайӑхланса пырӗ тесе шутлани—тӗрӗс мар пулнӑ пулӗччӗ. Ҫак йӗрке вӑл пуринчен малтан колхозсене ертсе пырассине темиҫе хут лайӑхлатма хушать. Колхозсене халӗ конкретлӑ ертсе пымалла, колхозсен экономикине, унӑн мӗнпур енӗсене, уйрӑмлӑхӗсене, колхозсен ҫӗрӗсене, вӗсен пахалӑхӗсене, колхозра мӗнле культура ытларах тупӑш панине, колхозри ҫынсене, вӗсен ӗҫӗсемпе опычӗсене лайӑх пӗлес пулать.

Чӑваш республикинчи колхозсене пирӗн партипе правительство пит те хӑватлӑ хӗҫпӑшал пачӗҫ. Ялхуҫалӑх культурисен тухӑҫлӑхне тата выльӑх-чӗрлӗх продуктивлӑхне ӳстернӗшӗн колхозниксене ӗҫшӗн хушса тӳлесси ҫинчен йышӑннӑ постановлени—пирӗн республикӑри колхозсемшӗн историллӗ документ пулса тӑрать. Ҫак постановлени колхозсен обществӑллӑ хуҫалӑхне тата колхозниксен массисен пурнӑҫне малалла татах та ытларах ӳстерсе пыма пулӑшать.

Агрономи наукин ҫитӗнӗвӗсемпе тӗрӗс усӑ курса, ялхуҫалӑхӗнче малта пыракансен—тырпул мастерӗсен опычӗсемпе анлӑн усӑ курса, кашни колхоз, кашни бригада тата звено ялхуҫалӑхӗн мӗнпур культурисен тухӑҫлӑхне тата обществӑллӑ выльӑх-чӗрлӗх продуктивлӑхне вӑйлӑн ӳстерсе пырӗ, колхозниксен ӗҫ тухӑҫлӑхӗ темиҫе хут ӳсӗ. Ҫапла вара, социализмлӑ ялхуҫалӑх пирӗн тӑван ҫӗршыври ӗҫҫыннисем валли продуктсем ытларах та ытларах туса парӗ, ҫӗнӗ те чаплӑ ҫитӗнӳсем патне малалла кайӗ.

СССР Совнаркомӗнче

Наука, изобретенисем, литература тата искусство енӗпе тунӑ ӗҫсемшӗн Сталин ячӗпе премии пама тӑратнӑ ӗҫсене малтанлӑха пӑхса тухас тӗлӗшпе тунӑ пысӑк ӗҫшӗн СССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ Сталинла премисем тӗлӗшпе ӗҫленӗ Комитетсен членӗсене пурне те тата ҫав Комитетсен председателӗсене **А. И. Бах** академика тата СССР халӑх артистне **В. И. Немирович-Данченкона** тав тунӑ.

(ТАСС.

ССР Союзӗпе Швейцари хушшинче таварҫаврӑнӑш ҫинчен тунӑ килӗшӳ вӑя кӗнӗ

Бернран ҫакӑн пек пӗлтерӳ илнӗ: ССР Союзӗпе Швейцари хушшинчи таварҫаврӑнӑш ҫинчен 1941 ҫулти февралӗн 29-мӗшӗнче Мускавра тунӑ килӗшӗве Швейцарин союзнӑй совечӗ ырланӑ.

Ҫак килӗшӗве ҫавӑн пекех ССР Союзӗн правительстви те ырланӑ.

Ҫакӑнпа ӗнтӗ ССР Союзӗпе Швейцари хушшинче таварҫаврӑнӑш ҫинчен тунӑ килӗшӳ вӑя кӗнӗ. (ТАСС).

Ҫуракине хатӗр

Иртнӗ ҫулта «Сталинцы» колхоз (Ҫӗрпӳ районӗ) кашни гектартан тӗштырӑ 13 центнер туса илнӗ. Ку вӑл—ҫителӗксӗр. Кӑҫал колхозниксем гектартан 100 пӑтран кая мар тӗштырӑ туса илессишӗн тӑрӑшаҫҫӗ.

Вӑйлӑ тырпул туса илме колхоз хӗрсех хатӗрленет. Ҫуртыррисем акмалли вырӑна кӗрхи суха тунӑ. Мӗнпур тислӗке уя кӑларнӑ. Минераллӑ удобренисем кӳрсе килсе, типӗ вырӑна хунӑ. Колхозӑн 3 бригади те вӑрлӑхсене тасатса, лабораторине анализ тума панӑ. Пӑрҫа вӑрлӑхне 40 центнер алӑпа суйланӑ.

А. МИХЕЕВ.

СССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗпе ВКП(б) Центральный Комитечӗ 1941 ҫулти мартӑн 13-мӗшӗнче йышӑннӑ

ПОСТАНОВЛЕНИ

Ялхуҫалӑх культурисен тухӑҫлӑхне тата выльӑх-чӗрлӗх продуктивлӑхне ӳстернӗшӗн Чӑваш АСС Республикинчи колхозниксене ӗҫшӗн хушса тӳлесси ҫинчен

Ялхуҫалӑх культурисен тухӑҫлӑхне тата выльӑх-чӗрлӗх продуктивлӑхне ӳстернӗшӗн колхозниксене ӗҫшӗн хушса тӳлемелле тӑвасси ҫинчен Чӑваш АСС Республикинчи колхозниксем ыйтнине тата партипе совет организацийӗсен ходатайствине шута илсе, ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗпе ВКП(б) Центральный Комитечӗ ҫапла йышӑнаҫҫӗ:

1. Колхозсене, 1941 ҫултан пуҫласа, бригада е звено планран иртерсе туса илнӗ тӗштырӑсен, пӑрҫа-ясмӑк, техникӑллӑ, пахча-ҫимӗҫ тата выльӑх апачлӗх акнӑ культурӑсен, улмасемпе ҫырласен, ҫавӑн пекех выльӑхсене пӑхса ӳстерес, самӑртас ӗҫри тата выльӑх-чӗрлӗх продуктивлӑхне хӑпартас ӗҫри ытти показательсем тӑрӑх планпа пӑхнӑ заданисенчен иртерсе туса илнӗ продукцин пӗр пайне бригадӑсемпе звеносенчи колхозниксене малтан пӑхса хунӑ ӗҫкунӗсем ҫумне хушса натурӑпа е укҫан тӳлеме сӗнес.

2. Йӗтӗн, кантӑр, ҫӗрулми тата ытти техникӑллӑ культурӑсемпе сайра лартса тӑвакан культурӑсем акса тӑвас ҫӗрте звеносен паха опытне шута илсе, колхозсене производствӑллӑ бригадӑсенче звеносем организацилеме, вӗсем ҫумне йӗтӗн, кантӑр, махорка, ҫӗрулми, улӑх-ҫаран курӑкӗсем, пахча-ҫимӗҫ культурисемпе ытти культурӑсем акмалли пӗр паллӑ ҫӗр лаптӑкӗсене ҫирӗплетсе пама сӗнес.

3. Тырпул тухӑҫлӑхне ӳстерес плана иртерсе тултарнӑшӑн колхозниксене ҫакӑн чухлӗ хушса тӳлемелле тӑвас:

Тӗштырӑ культурисем тӑрӑх

Уйхир ӗҫӗнчи бригадӑри е звенори колхозниксем, бригада е звено ҫумне ҫирӗплетсе панӑ тӗштырӑ культурисен пӗтӗм ҫӗр лаптӑкӗ ҫинче тырӑ тухӑҫлӑхне планран иртерсе тултарнисем, бригада е звено планран иртерсе пухса илнӗ тӗштырӑн тӑваттӑмӗш пайне илеҫҫӗ.

Пӗр йышши е темиҫе йышши тӗштырӑ культурисем тӑрӑх тырпул тухӑҫлӑхне планран иртерсе илнӗ бригадӑри е звенори колхозниксене, бригада е звено ҫумне ҫирӗплетсе панӑ пӗтӗм ҫӗр лаптӑкӗ ҫинче акнӑ тӗштырӑ культурисен тухӑҫлӑхӗн планне вӑтам шутпа тултарнӑ пулсан, ӗҫшӗн хушса тӳлеҫҫӗ.

Бригада е звено ҫумне ҫирӗплетсе панӑ мӗнпур ҫӗр лаптӑкӗ ҫинче ҫурхи культура, кӗрхи тулӑ, пӑрҫа-ясмӑк таврашӗсем, е хуратулӑ тӑрӑх тырпул тухӑҫлӑхӗн планне кашни уйрӑм культура тӗлӗшпе иртерсе тултарнӑ бригадӑри е звенори колхозниксем бригада е звено валли планпа палӑртнӑ тухӑҫлӑхран иртерсе пухса илнӗ тӗштырӑн ҫуррине илеҫҫӗ.

Звено ҫумне ҫирӗплетсе панӑ ҫӗр лаптӑкӗ ҫинче вир тухӑҫлӑхӗн планне иртерсе тултарнӑ звенори колхозниксем палӑртса панӑ тухӑҫлӑхран иртерсе пухса илнӗ тухӑҫлӑхӑн тӑваттӑмӗш пайне натурӑпа илеҫҫӗ.

Йӗтӗн-долгунец тата кантӑр тӑрӑх

Звено ҫумне ҫирӗплетнӗ ҫӗр лаптӑкӗ ҫинче йӗтӗн-долгунец тата кантӑр тухӑҫлӑхӗн планне иртерсе тултарнӑ звенори колхозниксем кашни звено валли планпа палӑртнинчен иртерсе пухса илнӗ сӳсӗн виҫҫӗмӗш пайне вӑтам норма шучӗпе тата вӑрлӑхсен виҫҫӗмӗш пайне илеҫҫӗ.

Кунсӑр пуҫне, звено ҫумне ҫирӗплетсе панӑ йӗтӗн-долгунецпа кантӑрӑн пӗтӗм лаптӑкӗ ҫинче колхоз звено валли ҫирӗплетнӗ планран иртерсе пухса илнӗ сӳспе вӑрлӑхӑн кашни центнерӗшӗн звенори колхозниксем ҫак культурӑсен продукцийӗн кашни центнерӗн колхозри вӑтам хакӗн виҫҫӗмӗш пайне илеҫҫӗ, ҫак шута тӗп тӳлев тата колхоз илнӗ преми-надбавкӑсем те кӗреҫҫӗ.

Ҫӗрулми тата пахча-ҫимӗҫ культурисем тӑрӑх

Звено ҫумне ҫирӗплетнӗ пӗтӗм ҫӗр лаптӑкӗ ҫинче ҫӗрулми тухӑҫлӑхӗн планне иртерсе тултарнӑ звенори колхозниксем звено валли планпа палӑртнӑ тухӑҫлӑхран иртерсе пухса илнӗ ҫӗрулмин пиллӗкмӗш пайне илеҫҫӗ.

Звено ҫумне ҫирӗплетнӗ пӗтӗм ҫӗр лаптӑкӗ ҫинче пахча-ҫимӗҫ культурисен: купӑстан, хӑярсен, помидорсен, ҫимелли чӗкӗнтӗрӗн, ҫимелли кишӗрӗн тата суханӑн тухӑҫлӑхне планран иртерсе тултарнӑ звенори колхозниксем звено валли планпа палӑртнӑ тухӑҫлӑхран иртерсе пухса илнӗ тухӑҫлӑхӑн тӑваттӑмӗш пайне илеҫҫӗ.

Пахча-ҫимӗҫ культурисемпе выльӑх апачлӗх тымар-ҫимӗҫсен вӑрлӑхӗсен тухӑҫлӑх планне иртерсе тултарнӑ звенори колхозниксене тухӑҫлӑх планӗнчен иртерсе туса илнӗ вӑрлӑхсен кашни центнерӗшӗн, колхозри вӑрлӑхсен пӗр центнерӗн хакӗн 50 процентӗ чухлӗ шутпа, укҫан хушса тӳлеҫҫӗ, ҫав хак шутне тӗп тӳлев тата вӑрлӑхсемшӗн илекен преми-надбавкӑсем те кӗреҫҫӗ.

Парниксемпе теплицӑсенче пахча-ҫимӗҫ лартса ӳстермелли плана иртерсе тултарнӑ звенори колхозниксем, калча лартса ӳстермелли плана тултарнӑ пулсан, планран иртерсе пухса илнӗ тухӑҫлӑхӑн кашни центнерӗшӗн колхоз лартнӑ ҫӗр ҫинчи пахча-ҫимӗҫсен пӗр центнерӗн хакӗнчен виҫҫӗмӗш пайне илеҫҫӗ.

Махорка тӑрӑх

Звено ҫумне ҫирӗплетнӗ ҫӗр лаптӑкӗ ҫинче тухӑҫлӑхӑн планне иртерсе туса илнӗ махоркӑн кашни центнерӗшӗн ҫав звенори колхозниксем, махорка чӗр таварӗн пахалӑхне шута илсе, колхоз махоркӑн пӗр центнерӗшӗн заготпунктран илекен вӑтам хакӑн 50 процентне илеҫҫӗ, ҫак шута тӗп тӳлев тата колхоз илекен преми-надбавкӑсем те кӗреҫҫӗ.

Выльӑхсене тӑрантармалли культурӑсем тӑрӑх

Бригада е звено ҫумне ҫирӗплетсе панӑ ҫӗр лаптӑкӗ ҫинче нумай ҫуллӑха е пӗр ҫуллӑха акнӑ курӑксен, улӑх утин тухӑҫлӑхне планпа пӑхнинчен иртерсе тултарнӑ кашни бригадӑри е звенори колхозниксем бригада е звено валли ҫирӗплетнӗ планран иртерсе пухса кӗртнӗ культурӑсен виҫҫӗмӗш пайне илеҫҫӗ.

Звено ҫумне ҫирӗплетнӗ пӗтӗм ҫӗр лаптӑкӗ ҫинче выльӑхсене тӑрантармалли тымар-ҫимӗҫсен тухӑҫлӑхне планпа пӑхнинчен иртерсе тултарнӑ звено колхозникӗсем звено валли ҫирӗплетнӗ планран иртерсе пухса кӗртнӗ тухӑҫлӑхӑн виҫҫӗмӗш пайне илеҫҫӗ.

Бригада ҫумне ҫирӗплетнӗ ҫӗр лаптӑкӗ ҫинче клеверпа люцерна, тимофеевка, вика тата улӑх-ҫарансемпе уя акакан курӑксен вӑрлӑхӗсен тухӑҫлӑхне планпа пӑхнинчен иртерсе тултарнӑ кашни центнер вӑрлӑхшӑн колхозниксене пӗр центнер вӑрлӑхӑн государство закупки хакӗнчен виҫҫӗмӗш пайне памалла.

Кунсӑр пуҫне, контрактаци тата госзакупкӑсем тӑрӑх государствӑна планран иртерсе панӑ кашни центнер клеверпа люцерна, тимофеевка, вика тата улӑх-ҫарансемпе уя акакан курӑксен вӑрлӑхӗшӗн, бригадӑри колхозниксене преми-надбавкӑсен 50 процентне, клевер, люцерна, вика тата тимофеевка тӑрӑх ҫавӑн пекех тата колхоз ҫав курӑксен вӑрлӑхӗсемшӗн заготовительсенчен илнӗ тыррӑн виҫҫӗмӗш пайне памалла.

Садсем, ҫырла пахчисем тата ҫимӗҫ йывӑҫҫисен питомникӗсем тӑрӑх

Звено е бригада ҫумне ҫирӗплетнӗ пӗтӗм ҫӗр лаптӑкӗ ҫинче улмасемпе ҫырласен тухӑҫлӑхне планпа пӑхнинчен иртерсе ӳстернӗ звенори е бригадӑри колхозниксем, бригада тата звено планран иртерсе туса илнӗ улмасемпе ҫырласен тухӑҫӗн виҫҫӗмӗш пайне илеҫҫӗ.

Звено ҫумне ҫирӗплетнӗ улма-ҫырла питомникӗн пӗтӗм ҫӗр лаптӑкӗ ҫинче лартмалли стандартлӑ материалсем пухмалли плана иртерсе тултарнӑ звено тата бригада колхозникӗсене, колхоз лартмалли материала сутнӑ вӑтам хакпа шутласа, планран иртерсе туса илнӗ продукци хакӗн виҫҫӗмӗш пайне укҫан хушса тӳлеҫҫӗ.

4. Выльӑх-чӗрлӗх фермисенче ӗҫлекен колхозниксене, сӗт суса илес, ҫамрӑк выльӑхсене пӑхса ҫитӗнтерес, вӗсене самӑртас, ҫӑм касса илес, выльӑх-чӗрлӗх продуктивлӑхне хӑпартас тӗлӗшри ытти показательсем тӑрӑх та планпа панӑ заданисене иртерсе тултарнӑшӑн ҫакӑн чухлӗ хушса тӳлемелле тӑвас

Мӑйракаллӑ шултра выльӑхсен фермисенче

Доярка-выльӑх пӑхакана—ун ҫумне ҫирӗплетсе панӑ ӗнесенчен планпа пӑхнинчен иртерсе сӗт суса илсен тата фуражнӑй пӗр ӗне пуҫне вӑтам шутпа ҫулталӑка 1.500 литр сӗт суса илсен, планпа пӑхнинчен ытларах суса илнӗ сӗтрен 15 процентне памалла; 1.500 литртан пуҫласа 2000 литр таран суса илсен, 20 процент памалла; 2.000 литртан пуҫласа 2.500 литр таран суса илсен, 30 процент памалла; 2.500 литртан ытларах суса илсен планпа пӑхнинчен ытларах суса илнӗ сӗтрен 50 процентне памалла.

Выльӑх пӑхакана-кӗтӳҫе — вӑл пӑхакан ӗнесенчен пуринчен те планран иртерсе сӗт суса илнӗшӗн, планран ытларах суса илнӗ сӗтрен 5 процентне памалла.

Доярка-выльӑх пӑхакана — ҫулталӑк пуҫламӗшӗнче хӑйне ҫирӗплетсе панӑ ӗнесемпе пушмак пӑрусенчен пуринчен те пӑрусем илнӗшӗн тата вӗсене пӑру пӑхакана париччен 15—20 кун хушши сыхласа ӳстернӗшӗн 75 литр сӗт памалла.

Доярка-выльӑх пӑхакана — ун ҫумне ҫирӗплетсе панӑ ӗнесемпе пушмак пӑрусенчен илнӗ пӑрусене пурне те 6 уйӑха ҫитиччен сыхласа ӳстернӗшӗн, илсе пӑхса ӳстернӗ кашни пӑрушӑн 3-шер литр сӗт памалла.

Кунсӑр пуҫне, пӑрусене пурне те 6 уйӑха ҫитиччен сыхласа ӳстерсе, тата вӗсем вӑтам шутпа талӑкра чӗрӗ виҫепе хутшӑнса пымалли плана ытлашшипех тултарнӑшӑн планпа пӑхнинчен ытларах хутшӑннӑ кашни 10 килограммшӑн 5-шер литр сӗт памалла.

Пӑру пӑхакана — ун ҫумне ҫирӗплетнӗ мӗнпур пӑрусене 6 уйӑха ҫитиччен сыхласа ӳстернӗшӗн, ӳстернӗ кашни пӑрушӑн (чӗрӗ виҫепе шутласа) 0,5-шер килограмм аш-какай памалла.

Кунсӑр пуҫне, ӑна ҫирӗплетсе панӑ пӑрусене пурне те сыхласа тата пӑхса ӳстернӗшӗн тата вӑтам шутпа талӑкра чӗрӗ виҫепе хутшӑнса пымалли плана ытлашшипех тултарнӑшӑн, пӑру пуҫне планпа пӑхнинчен ытларах хутшӑннӑ кашни 10 килограммшӑн (чӗрӗ виҫепе шутласа) 0,5-шер килограмм аш-какай памалла.

Пӑрусене 6 уйӑхран пуҫласа 1 ҫулталӑк тултариччен пӑхакан скотнике — пӑрусене пурне те сыхласа ӳстернӗшӗн тата вӑтам шутпа талӑкра чӗрӗ виҫепе хутшӑнса пымалли плана ытлашшипех тултарнӑшӑн пӑру пуҫне планпа пӑхнинчен ытларах хутшӑннӑ кашни 10 килограммшӑн (чӗрӗ виҫепе шутласа) пӗрер килограмм аш-какай памалла.

Мӑйракаллӑ шултра ҫамрӑк выльӑхсене пӑхакан скотнике — пӗр ҫулталӑк тултарнисенчен пуҫласа 2 ҫул таранхи ҫамрӑк выльӑхсене пурне те сыхласа усранӑшӑн тата вӗсем вӑтам шутпа талӑкра чӗрӗ виҫепе хутшӑнса пымалли плана ытлашшипех тултарнӑшӑн планпа пӑхнинчен ытларах хутшӑннӑ кашни 10 килограммшӑн (чӗрӗ виҫепе шутласа) 0,5-шер килограмм аш-какай памалла.

Выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес енӗпе ӗҫлекен бригадӑсенче **мӑйракаллӑ шултра выльӑхсене самӑртас тата вӗсене ирӗкре пӑхса ҫӳрес тӗлӗшпе ӗҫлекен колхозниксене**, вӗсем пӑхакан выльӑхсем 3 уйӑх хушшинче малтанхи виҫе ҫумне — ҫитӗннӗ выльӑхсем 15 процент, ҫамрӑк выльӑхсем 25 процент хутшӑнсан, планпа пӑхнинчен ытларах хутшӑннӑ кашни 10 килограммшӑн (чӗрӗ виҫепе шутласа) 0,5-шер килограмм аш-какай памалла.

Бригадира е пӗр бригадӑран тӑракан ферма заведующине — ферма сӗт суса илес плана иртерсе тултарнӑшӑн, ҫулталӑк пуҫламӗшӗнче пулнӑ 100 ӗнепе пушмак пӑру пуҫне 85 пӑруран кая мар сыхласа тата пӑхса ӳстернӗшӗн, планран иртерсе ытлашши суса илнӗ сӗтрен натурӑпа 3 процентне памалла.

Икӗ бригадӑран е ытларах та бригадӑран тӑракан ферма заведующине—ферма ҫав показательсем тӑрӑхах плана иртерсе тултарнӑшӑн планпа пӑхнинчен ытларах суса илнӗ сӗтрен 2 процентне памалла.

Сысна фермисенче

Сысна пӑхакансене — вӗсем ҫумне ҫирӗплетсе панӑ сысна амисенчен илнӗ ҫӑвӑрсене 2 уйӑха ҫитиччен пӑхса ҫитӗнтермелли плана иртерсе тултарнӑшӑн планпа пӑхнинчен ытлашши пӑхса ҫитӗнтернӗ кашни тӑваттӑмӗш ҫӑвӑршӑн 2 уйӑха ҫитнӗ 1 ҫӑвӑр памалла.

Сысна ӗрчетес енӗпе ӗҫлекен бригадӑсенчи колхозниксене — сыснасене самӑртмалли тата вӑтамран чӗрӗ виҫепе хутшӑнмалли плана иртерсе тултарнӑшӑн планпа пӑхнинчен ытлашши хутшӑннӑ кашни 100 килограммшӑн (чӗрӗ виҫепе шутласа) 15 килограмм аш-какай памалла.

Бригадира е ферма заведующине — сыснасене самӑртас плана, ҫавӑн пекех сысна ҫурисем пӑхса ӳстерес плана пӗтӗм фермӑпа ӳстерсе тултарнӑшӑн пӗтӗм самӑртнӑ сыснасем планпа пӑхнинчен (чӗрӗ виҫепе шутласа) ытлашши хутшӑннӑ кашни 100 килограммшӑн 4 килограмм аш-какай памалла.

Кунсӑр пуҫне бригадира е ферма заведующине, вӗсем ҫумне ҫӑвӑрсене пӑхса ӳстерме сысна амисем, ҫавӑн пекех самӑртма сыснасем ҫирӗплетсе панӑ пулсан, вӗсем хӑйсен ҫумне ҫирӗплетсе панӑ сыснасем тӗлӗшпе ҫав плансене иртерсе тултарсан, вӗсене сысна ӗрчетес тӗлӗшпе ӗҫлекен бригадӑсенчи колхозниксем валли тунӑ условисемпех хушса тӳлеҫҫӗ.

Сурӑх фермисенче

Сурӑхсене пӑхакан колхозниксене — ҫирӗплетсе панӑ сурӑх кӗтӗвӗнчен планран иртерсе ҫӑм касса илнӗшӗн планран иртерсе илнӗ ҫӑмӑн 10 процентне натурӑпа, е колхоз правленийӗ пӑхнӑ тӑрӑх ҫӑм хакӗнчен 10 процентне укҫан памалла.

Путексем пӑхса ӳстермелли плана иртерсе тултарнӑшӑн колхозниксене планран иртерсе пӑхса ӳстернӗ кашни 4 путекшӗн пӗр тирӗн вӑтам хакӗпе укҫан е пӗр тирне натурӑпа памалла.

Сурӑх фермин заведующине — путек пӑхса ӳстерес плана тултарнипе пӗрлех ҫӑм касса илмелли плана иртерсе тултарнӑшӑн пӗтӗм фермипе планран иртерсе касса илнӗ ҫӑмӑн 3 процентне натурӑпа е, колхоз правленийӗ пӑхнӑ тӑрӑх, ҫӑм хакӗнчен 3 процент укҫан памалла.

Кайӑк-кӗшӗк фермисенче

Кайӑк-кӗшӗксене пӑхакан колхозниксене — кайӑк-кӗшӗкрен ҫӑмарта илмелли плана иртерсе тултарнӑшӑн планран иртерсе илнӗ ҫӑмартасен 15 процентне тата вӗсем ҫумне ҫирӗплетнӗ кайӑк-кӗшӗксене ӗрчетмелли планран иртерсе пӑхса ӳстернӗ кайӑк-кӗшӗк чӗпписен ҫуррине памалла.

Утарсенче

Утарҫӑсене — ӑвӑс илмелли тата пыл-хурчӗн ҫемьисене ӳстермелли плана тултарнипе пӗрлех, пыл пухмалли плана иртерсе тултарнӑшӑн планран иртерсе илнӗ пылӑн 15 процентне памалла.

Кролик фермисенче

Кроликсене пӑхакан колхозниксене—кролик ҫурисене 6 уйӑха ҫитиччен пӑхса ӳстермелли плана иртерсе тултарнӑшӑн, планран иртерсе пӑхса ӳстернӗ кролик ҫурисен 25 процентне памалла.

Кролик тирӗсене пӗрремӗш сортпа сутмалли плана иртерсе тултарнӑшӑн — планран иртерсе пӗрремӗш сортпа панӑ тирсен хакӗн 15 процентне укҫан памалла.

Ангорски кроликсен мамӑкне сутмалли плана иртерсе тултарнӑшӑн — планран иртерсе панӑ мамӑк хакӗн 25 процентне памалла.

Тискер-кайӑксен фермисенче

Хура тилӗсен ҫурисене 7 уйӑха ҫитиччен пӑхса ӳстерес тӗлӗшпе колхоз правленийӗ ҫирӗплетнӗ плана иртерсе тултарнӑшӑн **колхозник-звероводсене** тирсен хакӗнчен 20 процентне укҫан е планран ытлашши пӑхса ӳстернӗ чӗрӗ тилӗсен хакӗн 20 процентне памалла.

Кунсӑр пуҫне хура тилӗсен тирӗсене пӗрремӗш сортпа памалли плана иртерсе тултарнӑшӑн—планран иртерсе пӗрремӗш сортпа панӑ тирсен хакӗн 10 процентне укҫан памалла.

Юлашки 2-мӗш страницӑра.

Ялхуçалӑх культурисен тухӑçлӑхне тата выльӑх-чӗрлӗх продуктивлӑхне ӳстернӗшӗн Чӑваш АСС Республикинчи колхозниксене ӗçшӗн хушса тӳлесси çинчен

(Юлашки. Пуçламӗшӗ 1-мӗш страницӑра)

Лаша ӗрчетес тӗлӗшпе

Конюха — хӑйӗн çумне çирӗплетсе панӑ мӗнпур кӗсресенчен (хӑмлама юрӑхлӑ кӗсресенчен) тихасем илнӗшӗн тата илнӗ тихасене вӗсем сӗт ӗмме пӑрахиччен пурне те сыхласа пӑхса ӳстернӗшӗн — ӑратлӑ кӗсререн (ӑрат кӗнеки çине çырнӑ кӗсререн) илнӗ кашни тихашӑн 50-шар тенкӗ тата ӑратлӑ мар кӗсререн илнӗ тихашӑн 25-шер тенкӗ хушса тӳлемелле.

Хӑйӗн çумне çирӗплетсе панӑ мӗнпур тихасене сӗт ӗмме пӑрахнӑ хыççӑн çулталӑк çурӑна çитиччен сыхласа пӑхса ӳстернӗшӗн конюха çакӑн чухлӗ хушса тӳлемелле: кашни ӑратлӑ тихашӑн 25-шер тенкӗ тата ӑратлӑ мар кашни тихашӑн 15-шер тенкӗ.

Лаша ӗрчетекен бригадӑн бригадирне е лаша фермин заведующине — тихасене пӑхса ӳстермелли плана ирттерсе тултарнӑшӑн, лашасен хисепӗ тӗлӗшпе панӑ плана тултарнӑ пулсан, çулталӑк вӗçӗ тӗлне планран ытлашши пӑхса ӳстернӗ кашни тихашӑн 50-шар тенкӗ хушса тӳлемелле.

Выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетекен пысӑк мар фермӑсемлӗ колхозсенче, фермӑсене пӗр çын çеç ертсе пынӑ çӗрте, заведующине — плана ирттерсе тултарнӑшӑн тивӗçлӗ выльӑх-чӗрлӗх фермин заведующине тӳленӗ чухлех хушса тӳлеççӗ.

5. Чӑваш АСС Республикинчи колхозсем тӑрӑх ялхуçалӑх культурисен вӑтам тухӑçлӑхӗн 1941 çулти планне, çав культурӑсен çирӗплетсе панӑ тухӑçлӑхне ирттерсе ӳстернӗшӗн хушса тӳлемелле туса, çакӑн пек çирӗплетес:

Мӗнпур тӗштырӑ культурисем	гектартан	13,0	центнер
Вӑл шутра: кӗрхи ыраш	»	14,0	»
кӗрхи тулӑ	»	12,5	»
çурхи тулӑ	»	11,3	»
урпа	»	14,7	»
сӗлӗ	»	13,5	»
вир	»	10,0	»
хуратулӑ	»	7,1	»
пӑрça	»	10,0	»
пӑри	»	12,0	»
Йӗтӗн-долгунец сӳсӗ	»	3,7	»
Йӗтӗн-долгунец вӑрлӑхӗ	»	3,4	»
Кантӑр сӳсӗ	»	4,7	»
Кантӑрвӑрри	»	4,0	»
Çӗрулми	»	115	»
Махорка	»	15,0	»

Уçӑ вырӑнти пахча-çимӗç культурисем:

Ир çитӗнекен купӑста	»	120	»
Вӑтам вӑхӑтра тата кая юлса çитӗнекен купӑста	»	150	»
Помидор	»	120	»
Хӑяр	»	120	»
Çимелли чӗкӗнтӗр	»	140	»
Çимелли кишӗр	»	120	»
Сухан	»	90	»

Хупӑ вырӑнти пахча-çимӗçсем:

Парникри пӗр рамӑран	10	килограмм
Теплицӑн пӗр тӑваткӑл метрӗ çинчен	12	»

Пахча-çимӗç культурисемпе выльӑх апачлӗх лартакан тымар-çимӗçсен вӑрлӑхӗсем:

Хӑяр	гектартан	0,7	центнер
Купӑста вӑрри	»	1,2	»
Кишӗр вӑрри	»	1,5	»
Çимелли чӗкӗнтӗр вӑрри	»	5,0	»
Помидор	»	0,3	»
Турнепс вӑрри	»	2,0	»
Выльӑх апачӗ тума лартакан чӗкӗнтӗр вӑрри	»	5,5	»

Нумай çула пыракан тата пӗр çула пыракан куракӑсен вӑрлӑхӗсем:

Клевер тата тимофеевка	»	1,3	»
Люцерна	»	1,0	»
Улӑх-çаран куракӗсем	»	1,2	»
Вика	»	10,0	»
Утӑлӑх акакан нумай çула пыракан куракӑсем	»	24,0	»
Утӑлӑх акакан пӗр çула пыракан куракӑсем	»	20,0	»
Хӑй тӗллӗн ӳсекен çаран ути	»	18,0	»
Выльӑх кӑшманӗ	»	150,0	»

Улмасемпе çырласем:

Улма-çырла паракан садсем тӑрӑх:

Вӑрӑллисем	»	30,0	»
Шӑмӑллисем	»	25,0	»
Çырласем	»	25,0	»

Улма-çырла питомникӗсем:

Куçарса лартмалли стандартлӑ материалсем гектартан 12 пин штука туса илмелле.

6. Чӑваш АСС Республикинчи колхозсем тӑрӑх выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗçри вӑтам продуктивлӑхӑн 1941 çулти заданийӗсене, вӗсене ирттерсе тултарнӑшӑн колхозниксене хушса тӳлемелле туса, çапла çирӗплетес:

Колхозри тӑрантаракан кашни ӗнерен 1100 литр сӗт суса илмелле.

Çулталӑк пуçламӗшӗ тӗлне пулнӑ кашни 100 пуç ӗнепе пушмак пӑрусенчен 85 пуç пӑру пӑхса ӳстермелле.

Пӑрусем тата мӑйракаллӑ шултра çамрӑк выльӑхсем талӑкне вӑтам шутпа çакӑн чухлӗ хутшӑнса пымалла (грамсемпе):

Выльӑхсен ӑрачӗсем	6 уйӑха çити	6 уйӑхран пӗр çула çити	Пӗр çултан 2 çула çити
Симментальски ӑратлисем	550	450	350
Красногорбатовски ӑрат тата симментальски ӑратӑн метисӗсем	500	400	330
Вырӑнти выльӑхсем	450	370	300

Колхозра çулталӑк пуçланнӑ тӗле пулнӑ 9 уйӑхран иртнӗ кашни сысна ами пуçне 11 çурӑ пӑхса ӳстермелле.

10 уйӑхран иртмен сыснана самӑртнӑ хыççӑн унӑн чӗрӗ виçи сысна самӑртмалли плана тултарнипе пӗрле 90 килограмм пулмалла.

Колхозра çулталӑк пуçламӗшӗ тӗлне пулнӑ кашни пӗр сурӑх пуçне 2,3 килограмм çӑм илмелле.

Колхозра çулталӑк пуçламӗшӗ тӗлне пулнӑ кашни 100 сурӑхпа пӗр çул тултарнӑ çурхи путек пуçне 110 пуç путек пӑхса ӳстермелле.

Çӑмарта тӑвакан кашни кайӑк-кӗшӗкрен çакӑн чухлӗ çӑмарта илмелле:

чӑхран	70	çӑмарта
кӑвакалтан	40	çӑмарта
кӑрккаран	20	çӑмарта

Кайӑк-кӗшӗк чӗпписене 6 уйӑха çити пӑхса ӳстермелле:

Чӑх чӗпписемпе кӑвакал чӗпписене	85 процент
Кӑркка чӗпписене	75 процент

Çулталӑк пуçламӗшӗнче пулнӑ кашни хур ами пуçне 6 уйӑха çитиччен 5 чӗпӗ пӑхса ӳстермелле.

Колхозра çулталӑк пуçламӗшӗ тӗлне пулнӑ кашни пӗр çемье пыл-хурчӗ пуçне çулталӑкра пурӗ 32 килограмм пыл пухса илмелле.

Вӑл шутран таварлӑх пыл 10 килограмм.

Çулталӑкне кашни çемье пуçне пурӗ 0,7 килограмм ӑвӑс илмелле.

Колхозра çулталӑк пуçламӗшӗнче пулнӑ кашни ама кролик пуçне 6 уйӑха çитиччен 12 пуç кролик çури пӑхса ӳстермелле.

Колхозра çулталӑк пуçламӗшӗ тӗлне пулнӑ ангорски ӑратлӑ кашни ама кроликран (çурисемпе пӗрле шутласан) 400 грамм мамӑк илмелле.

Государствӑна панӑ пӗтӗм тирсенчен пӗрремӗш сортлӑ тирсем 40 процент пулмалла.

7. Чӑваш АССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Обкомне çак постановлени тӑрӑх ялхуçалӑх культурисен тухӑçлӑхӗн тата выльӑх-чӗрлӗх продуктивлӑхӗн планлӑ заданийӗсене вунӑ кунлӑ срокра районсем валли туса пама, райсоветсен исполкомӗсемпе ВКП(б) райкомӗсене — заданисене вунӑ кунлӑ срокра колхозсем патне çитерме хушас.

Бригадӑсем, звеносем тата выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетекен фермӑсем валли тырпул тухӑçлӑхӗпе выльӑх-чӗрлӗх продуктивлӑхӗн планне малтанлӑха колхоз правленийӗ обязательнӑ агрономпа тата зоотехникпа пӗрле палӑртса хатӗрлет, çакӑн хыççӑн ӑна колхоз членӗсен пӗрлехи пухӑвӗ сӳтсе-явса çирӗплетет.

8. Колхозсене çапла тума сӗнес: тырпул тухӑçлӑхӗпе выльӑх-чӗрлӗх продуктивлӑхӗн планӗсене ирттерсе тултарнӑшӑн колхозниксене хушса тӳлемелле, анчах та вӑл колхозник мартӑн 15-мӗшпе декабрӗн 1-мӗш хушшинче колхоз производствинче çакӑн чухлӗ ӗçкунӗнчен кая мар ӗçлемелле: йӗтӗн, кантӑр тата махорка акса тӑвакан колхозсенче—130 ӗçкунӗнчен кая мар, ытти колхозсенче — 100 ӗçкунӗнчен кая мар.

Выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес тӗлӗшпе ӗçлекен бригадӑсенче çулталӑк хушшинче колхозра 220 ӗçкунӗнчен кая мар ӗçленӗ колхозниксене хушса тӳлемелле.

Йӗтӗн, кантӑр тата махорка акса тӑвакан колхозсенче мартӑн 15-мӗшпе декабрӗн 1-мӗш хушшинче 130 ӗçкунӗнчен каярах, анчах 100 кунран нумайтарах ӗçленӗ колхозниксене, ытти колхозсенче çав вӑхӑт хушшинчех 100 ӗçкунӗнчен каярах, анчах 80 кунран нумайрах ӗçленӗ колхозниксене, выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес тӗлӗшпе ӗçлекен бригадӑсенчи колхозниксене, çулталӑк хушшинче колхозра 220 ӗçкунӗнчен каярах, анчах 170 ӗçкунӗнчен нумайрах ӗçленисене, тырпул тухӑçлӑхӗпе выльӑх-чӗрлӗх продуктивлӑхӗн планӗсене ирттерсе тултарнӑшӑн хушса памалли тӳлевӗн çуррине параççӗ.

9. Палӑртса çирӗплетнӗ ӗçкунӗсене ӗçлесе тултарман чухне — ача çуратнине кура отпускра пулнӑ колхозницӑсем, çар ӗçне вӗренмелли сборсенче пулнӑ, Рабочисемпе Хресченсен Хӗрлӗ Çарӗпе Тинӗс-Çар Флочӗн речӗсене илнӗ колхозниксем тата планлӑ йӗркепе колхозран промышленноçа, транспорта тата халӑх хуçалӑхӗн ытти отраçлисене, çавӑн пекех вӗренме кайнӑ çынсем, ертсе пыракан ӗçе куçарса лартнӑ çынсем, — вӗсем ӗçлесе çитереймен ӗçкунӗсен хисепӗ çӳлте кӑтартнӑ сӑлтавсем пирки çав ӗçсенче пулайман вӑхӑтпа танлашать пулсан, —тырпул тухӑçлӑхӗпе выльӑх-чӗрлӗх продуктивлӑхне ирттерсе тултарнӑшӑн хушса паракан тӳлеве илме пултараççӗ.

10. Çакӑн пек тӑвас: плансене ирттерсе тултарнӑшӑн колхозниксене хушса памалли тӳлеве çапла валеçсе параççӗ:

а) звенора—звенори кашни колхозник звено çумне çирӗплетнӗ культура тӗлӗшпе ӗçлесе тунӑ ӗçкунӗсен хисепӗ тӑрӑх;

б) бригадӑра — колхозниксем тӳрремех бригада çумне çирӗплетнӗ тӗштырӑ культурисемпе ытти çавӑн пек культурӑсем тӗлӗшпе ӗçлесе тунӑ ӗçкунӗсен хисепӗ тӑрӑх (звенори колхозниксем звеносем çумне çирӗплетнӗ культурӑсем тӗлӗшпе ӗçлесе тунӑ ӗçкунӗсене звено тӑрӑх кӑна шута илеççӗ);

в) сурӑх, кайӑк-кӗшӗк, кролик фермисемпе утарсенче — тивӗçлӗ фермӑсенче ӗçлесе тунӑ ӗçкунӗсем тӑрӑх.

11. Уйхир бригадин бригадирне тӳрремех бригада çумне çирӗплетнӗ тӗштырӑ культурисем тата ытти çавӑн пек культурӑсем тӑрӑх тырӑ тухӑçлӑхӗн планне ирттерсе тултарнӑшӑн — çав бригадӑри колхозниксене хушса паракан вӑтам тӳлеврен пӗрре çурӑ хут ӳстерсе тӳлеççӗ.

Кунсӑр пуçне, звеносем техникӑллӑ культурӑсен, сайра лартса тӑвакан культурӑсен, тӗштырӑ культурисемпе ытти культурӑсен тухӑçлӑхӗн планне ирттерсе тултарнӑшӑн та бригадирсене хушса тӳлемелле.

Бригада составне кӗрекен пур звеносем те тырпул тухӑçлӑхӗн планне ирттерсе тултарассишӗн бригадир тӳррӗмех интересленсе ӗçлемелле тӑвас шутпа, çапла тӑвас: звеносем çумне çирӗплетнӗ культурӑсем тӑрӑх хушса паракан тӳлеве бригадир, бригадӑри звеносен хисепӗнчен çурринчен кая мар хисепӗ хӑйсене çирӗплетсе панӑ тухӑçлӑх планне ирттерсе тултарнӑ пулсан тин тата ирттерсе тултарнӑ культурӑсем тӑрӑх çеç илет.

Бригадира хушса паракан тӳлеве çапла шутласа памалла: тухӑçлӑх планне ирттерсе тултарнӑ звеносенчи колхозниксене хушса паракан тӳлевӗн пӗтӗм суммине бригадӑри пӗтӗм звеносенчи, техникӑллӑ культурӑсен, сайра лартса тӑвакан культурӑсен, тӗштырӑ культурисемпе ытти культурӑсен лаптӑкӗсене çирӗплетсе панӑ звеносенчи колхозниксен хисепӗ çине пайлаççӗ, пайланӑ хыççӑн тухакан вӑтам сумма — бригадира хушса памалли тӳлев пулать.

Пахча-çимӗç бригадин тата сад-ӗç бригадин бригадирне ӗçшӗн хушса тӳлессин пысӑккӗшне те уйхир ӗç бригадин бригадирне хушса тӳлессин пысӑккӑшне палӑртнӑ пекех палӑртмалла.

12. Колхоз ялхуçалӑх культурисен тухӑçлӑхӗн тата выльӑх-чӗрлӗхсен продуктивлӑхӗн планне ирттерсе тултарнӑшӑн колхоз председательне ӗçкунӗсем çакӑн чухлӗ хушса шутласа памалла тата укçан çакӑн чухлӗ хушса тӳлемелле тӑвас:

Тырпулсен тухӑçлӑхӗн тата выльӑх-чӗрлӗхсен продуктивлӑхӗн планне ирттерсе тултарнӑшӑн	Плана ирттерсе тултарнин пысӑккӗшӗ	Кашни уйӑхра ӗçкунӗсемпе тата укçан тӳлемелле туни çумне хушса çакӑн чухлӗ процент шутласа параççӗ
Вӑтамран пӗтӗм тӗштырӑ культурисем тӑрӑх	10% таран 11—25% 25% ытларах	15% 25% 40%
Мӗнпур техникӑллӑ тата пахча-çимӗç культурисем тӑрӑх, — çак постановлени тӑрӑх тата ятарласах йышӑннӑ постановленисемпе договорсем тӑрӑх колхозниксене премиш пама палӑртман культурӑсене кӗртмесӗр.	10% таран 11—25% 25% ытларах	15% 25% 40%
Выльӑх-чӗрлӗх фермисем иккӗ е ытларах тытакансене	10% таран 11—25% 25% ытларах	15% 25% 40%

13. Çакӑн пек тӑвас: колхоз ялхуçалӑх культурисен тухӑçлӑхӗн планне ирттерсе тултарнӑшӑн агронома, колхоз полеводне тата выльӑх-чӗрлӗхсен продуктивлӑхӗн планне ирттерсе тултарнӑшӑн колхоз зоотехникне çак çитӗнӳсемшӗн колхоз председательне хушса тӳлемелли хисепӗн 70 проценчӗ чухлӗ хушса тӳлемелле.

14. Тырпул тухӑçлӑхӗн планне тата выльӑх-чӗрлӗхсен продуктивлӑхӗ тӗлӗшпе панӑ заданисене ирттерсе тултарнӑшӑн колхозниксене натурӑпа е укçан хушса тӳлессине колхоз ялхуçалӑх продуктисен поставкисем тӑрӑх государство умӗнчи обязательствӑсене тултарнӑ хыççӑн, вӑрлӑх, фураж, страховой тата колхозсенчи ытти обществӑллӑ фондсене туса çитернӗ хыççӑн, колхозра тупӑшсене валеçнипе пӗр вӑхӑтра туса ирттермелле.

Натурӑпа сӗт, пахча-çимӗçсем тата нумай вӑхӑт хушши сыхланса усранма пултарайман ытти продукци парассине çулталӑк хушшинче аванс йӗркипе, колхоз правленийӗ палӑртнӑ сроксенче, государство умӗнчи обязательствӑсене мӗнле тултарса пынине кура туса пымалла.

15. Колхозсене хальхи вӑхӑтра ӗçлекен звеносене çаплах хӑварма сӗнес, вӗсен çумне, çавӑн пекех çӗнӗрен тӑвакан звеносем çумне те, правило пекех, 2—3 культурӑран ытла мар çирӗплетсе памалла тата звеносем çумне тӗштырӑ культурисем те çирӗплетсе паракан колхозсенче 3—5 культурӑран ытла мар, пӗр çул хушшинчен кая мар сроклӑха çирӗплетсе памалла.

Звеньевой звенори ытти колхозниксемпе пӗртанах ӗçленине тата кунпа пӗрлех вӑл звенона ертсе пынине шута илсе, колхозсене звенона ертсе пынӑшӑн звеньевоя кашни уйӑхрах звенори мӗнпур членсем ӗçлесе илнӗ ӗçкунӗсен пӗтӗм хисепӗнчен 2—3 процент шутласа памалла.

16. Çак постановленине йышӑннӑ май, Чӑваш АССР тӑрӑх çак постановленисем хӑйсен вӑйне çухатнӑ тесе шутлас:

а) СССР Совнаркомӗ 1938 çулти апрелӗн 3-мӗшӗнче «Йӗтӗн-долгунец сӳсӗпе вӑрлӑхӗн тухӑçлӑхне ӳстермелли тата вӗсен пахалӑхне лайӑхлатмалли мероприятисем çинчен» йышӑннӑ 434-мӗш №-лӗ постановленин 13-мӗш пункчӗ (С. П. СССР 1938 г., № 15, ст. 94) тата СССР Совнаркомӗ 1938 çулти июлӗн 23-мӗшӗнче «1938 çулта тырпулсене пухса кӗресси çинчен» йышӑннӑ 775-мӗш №-лӗ постановленин (С. П. СССР 1938 г., № 29, ст. 183) 38-мӗш пункчӗ, звеньевойсене тата звено членӗсене премилес йӗркесем çинчен кӑтартса панӑ вырӑн;

б) ЦК ВКП(б) тата СССР Совнаркомӗ 1940 çулти августӑн 1-мӗшӗнче «Уборка тата ялхуçалӑх продуктисен заготовки çинчен» йышӑннӑ постановленин (С. П. СССР 1940 г., № 20, ст. 483) IV-мӗш уйрӑмӑн 7-мӗш пункчӗ тата VII уйрӑмӑн 5-мӗш пункчӗ,—колхозсенче преми-надбавкӑсене валеçмелли йӗрке çинчен кӑтартса панӑ вырӑн;

в) СССР Совнаркомӗ тата ЦК ВКП(б) «1940 çулта акма нумай çуллӑха пыракан куракӑсен вӑрлӑхӗсем çителӗклӗ пулмалла тӑвасси тата клевер, люцерна, житняк тата тимофеевка вӑрлӑхӗсене малашне ытларах тумалли мерӑсем çинчен» 1940 çулти январӗн 29-мӗшӗнче йышӑннӑ 155-мӗш №-лӗ постановленин (С. П. СССР 1940 г., № 3, ст. 80) «Г» уйрӑмӗнчи 2-мӗш пункт, колхозниксене преми-надбавка парасси çинчен калакан вырӑн;

г) СССР Совнаркомӗ «1938 çулта çӗрулми тухӑçне ӳстермелли мерӑсем çинчен» 1938 çулти мартӑн 19-мӗшӗнче йышӑннӑ 349-мӗш номерлӗ постановленин (С. П. 1938 г., № 14, ст. 86) 3-мӗш статьинчи» «Б» пункт.

СССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн председателӗ
В. МОЛОТОВ.

ВКП(б) Центральный Комитечӗн секретарӗ
И. СТАЛИН.

Квартал планне тултарнӑ

ÇЕМЕРЛЕ. **(Хамӑр корр.).** Инвалидсен артелӗнче ӗçлекенсен коллективӗ социализмлӑ ӑмӑртӑва сарса пынӑ май юлашки уйӑхсенче çӗнӗ çитӗнӳсем турӗ. Вӑл пӗрремӗш квартал планне икӗ уйӑх хушшинче ытлашшипех тултарнӑ.

Производство программине тултарса пырас тӗлӗшпе уйрӑмӑнах шапочнӑй (производство заведующийӗ Плаксин юлташ), швейнӑй (Коровников) цехсем малта пыраççӗ.

Артель февраль уйӑхӗнче 118 штука тӗрлӗ виçеллӗ тӗкӗрсем тата 1000 штука кӑсъене чикмелли тӗкӗрсем, 265 çӗлӗк т. ыт. йышши продукцисем тата ремонт ӗçне 103.712 тенкӗлӗх тунӑ, плана икӗ хут ытла ирттерсе тултарнӑ.

КОММУНИСТСЕН РАЙОНСЕНЧИ ПУХӐВӖСЕМ

ÇӖМӖРЛЕ

Мартӑн 16-мӗшӗнче районри парторганизацин пухӑвӗ пулса иртрӗ. Пухура парти райкомӗн секретарӗ Бобров юлташ XVIII партконференци итогӗсем çинчен доклад туса пачӗ. Бобров юлташ хӑйӗн докладӗнче 1940 çулта районри промышленность мӗнле ӗçленине тата унӑн ӗçӗнчи çитменлӗхсене тӗплӗн çутатса пачӗ.

Районри промышленность иртнӗ çулта плана 98 процент тултарнӑ. 23 предприятирен 15 предприяти кӑна çулталӑкри плана тултарма пултарнӑ. Çапла вара предприятисем пӗлтӗр государствӑна 571 пин тенкӗлӗх продукци парайман. Çакӑ вӑл предприятисем, партипе хуçалӑх органӗсем, çавӑн пекех парти райкомӗ те çителӗксӗр ӗçленине пӗлтерет.

Çӗмӗрле чугунçул станцийӗ тата Тыслецпа Кӑмаша разъезчӗсем начар ӗçленӗ. Вӗсенче вагонсем 15 сехет хушши ларас вырӑнне 21-шер сехет ларса простой тунӑ. Вокзалсенче тасалӑхпа йӗркелӗх пулман.

Предприятисенче продукцин хӑйне таракан хакне йӳнетес ӗç хӑйне майлӑ пулса пынӑ. Мехлесопункт иртнӗ çулта плана тултарманнине пула 400 пин тенкӗ убытка тӳснӗ.

Юлашкинчен докладчик районри предприятисем кӑçал мӗнле ӗçлени çинче чарӑнса тӑчӗ. Комбинат тата «Большевик» завод кӑçал та хӑйӗн планне йӗркеллӗ, график тӑрӑх тултарса пыраймаççӗ.

— Хӑшпӗр цехсенчи коммунистсем материалсене тирпейлӗ тыткаламаççӗ. Оборудованисемпе инструментсене тата материалсене çирӗп учета илмен,— терӗ комбинатӑн снабжени отделӗн начальникӗ Симов юлташ.

«Большевик» завод директорӗ Сусин юлташ завод январь тата февраль уйӑхӗсенче плана мӗншӗн тултарса ӗçлейменни тата март уйӑхӗнче график тӑрӑх ӗçлеме пуçӑнни, çавна май вара ӗçсем кӑштах лайӑхланни çинчен каларӗ.

Древкомбинат директорӗ Егоров юлташ парти райкомӗ предприятисене çителӗксӗр пулӑшни çинчен каласа пачӗ. Парти райкомӗ хӑшпӗр чухне ыйтусене тӗплӗн вӗренмесӗр сӳтсе-явнӑ, çиелтен кӑна çырнӑ решенисемпе лӑпланса ларнӑ.

Парторганизацин районри пухӑвӗ парторганизацисем енчен промышленноçпа транспорта ертсе пырассине вӑйлатма, вӗсене практикӑллӑ ӗçре ытларах пулӑшма кирли çинчен асӑрхаттарчӗ. Çавӑн пекех пуху XVIII партконференцин решенийӗсене ырласа, вӗсене пӗр пӑркаланмасӑр пурнӑça кӗртсе пыма пулчӗ.

А. ИЛЬМЕНТ.

КУСЛАВККА

Коммунистсен мартӑн 16-мӗшӗнче пулса иртнӗ районри пухӑвӗ ВКП(б) райкомӗн секретарӗ Русин юлташ партин Пӗтӗм Союзри XVIII конференцин итогӗсем çинчен туса панӑ докладне сӳтсе-яврӗ. Пренире 14 çын тухса каларӗç.

Докладчик тата пренире тухса калакансем предприятисемпе транспорт тата парторганизацин çитменлӗхӗсене тӗплӗн кӑтартса пачӗç. Парти райкомӗ тата пуçламӗш парторганизацисем иртнӗ çулсенче промышленноçпа транспорта ертсе пырас тӗлӗшпе çителӗксӗр ӗçленӗ. Предприятисем хӑйсен планӗсене йӗркеллӗ тултарса пырайман, продукци пахалӑхне лайӑхлатассишӗн, унӑн хӑйне ларакан хакне чакарассишӗн çителӗксӗр кӗрешнӗ.

Комбинатра уйӑхӑн малтанхи кунӗсенче плана тултарас тӗлӗшпе сахал ӗçленӗ, уйӑх вӗçӗнче штурмовщинӑпа кунне 8 сехет ӗçлес вырӑнне 10 сехет ӗçленӗ. Кунта электроэнергине, пӑса тата топливӑна перекетлес тӗлӗшпе те ӗçсем начар пулса пынӑ. Браксем пулнӑ, технологи процесне пӑснӑ. Комбинатри пуçламӗш парторганизаци хӑйӗн ӗçне XVIII партконференци решенийӗсем тӑрӑх урӑхлатса çӗнетес тӗлӗшпе ку вӑхӑтченех çителӗксӗр ӗçлет.

Комбинат график тӑрӑх ӗçлеме тытӑннӑ. Анчах график кунсерен пурнӑçланса пыни çук-ха.

Районри артельсем те иртнӗ çулта начар ӗçлерӗç. Вӗсем хӑйсем туса кӑларакан продукцин пахалӑхне лайӑхлатас ӗç çине сахал çаврӑнса пӑхнӑ.

Пренире тухса калакансем районри чылай колхозсенче çуракине япӑх хатӗрленсе пынине палла турӗç. Хальхи вӑхӑтра çичӗ колхозӑн акма вӑрлӑхсем çитмеççӗ.

Коммунистсен районри пухӑвӗ XVIII партконференци решенийӗсене ырларӗ, вӗсене кулленхи ӗçре пурнӑça кӗртсе пыма мероприятисем палӑртрӗ.

Н. МОРАНЬКОВ.

ВӐРМАР

Иртнӗ вырсарникун коммунистсен районри пухӑвӗ пулса иртрӗ. Пухура парти райкомӗн секретарӗ Никитин юлташ XVIII партконференци итогӗсем çинчен доклад туса пачӗ.

Никитин юлташ хӑйӗн докладӗнче Совет Союзӗнчи тата районри промышленность, çавӑн пекех транспорт тунӑ ӳсӗмсем, вӗсен ӗçӗнчи çитменлӗхсем çинче чарӑнса тӑчӗ.

Районра 33 предприяти. Вӗсенчен виçӗ предприяти кӑна 1940 çулти плана тултарнӑ. Сӑмахран, çу завочӗ — 113 процент, спортинвентарь фабрики—102 процент, Осипенко ячӗпе тӑракан артель — 131 процент тултарнӑ.

Предприятисенче тата артельсенче оборудованисемпе тӗрӗс усӑ курасси çине, тасалӑхпа йӗркелӗх çине сахал çаврӑнса пӑхнӑ. Енӗшпуçӗнчи кирпӗч заводӗнче сезон пӗтнӗ хыççӑн машинӑсене, çуртйӗрсене тата завод территорине пачах тасатман. Машинӑсем тутӑхнӑ, вӗсем патне юр лекнӗ. Кӗтеснерти пахча-çимӗçсем типӗтекен заводра та, чугунçул станцинче те, спортинвентарь фабрикинче те тасалӑхпа йӗркелӗх çук.

Чӗртаварсене начар пӑхса усранӑ тӗслӗхсем те пур. Енӗшпуçӗнчи кирпӗч заводӗнче 109 пин кирпӗче сая янӑ. Завод начар ӗçлени ертсе пыракан кадрсем улшӑнса тӑнинчен нумай килнӗ. 1930 çултанпа кунта 14 начальник улшӑннӑ, техноруксен хисепне пӗлме те хӗн. Иртнӗ çулта завод 136 пин тенкӗ убытка курнӑ. Продукци хакӗ пысӑк. План тӑрӑх пӗр пин кирпӗч 125 тенкӗ тӑмалла пулсан, 195 тенкӗ ларнӑ.

Машинно-тракторнӑй станци мастерскойӗнче те çавӑн пекех таса мар, урайне пачах шӑлмаççӗ Хаклӑ йышши машинӑсем юр айӗнче лараççӗ.

Рабочисене ӗçукçи тӳлес ӗçре те йӗркесӗрлӗхсем нумай-ха. Пысӑк квалификациллӗ рабочисемпе квалификацисӗр рабочисем ӗçукçине пӗр пекех илеççӗ. Сӑмахран, спортинвентарь фабрикинче квалификациллӗ столяр Иванов юлташ январь уйӑхӗнче 218 тенкӗ, упаковщица Андреева—166 тенкӗ илнӗ.

Предприятисемпе артельсенче прогулсем çаплах пулаççӗ. Акӑ, спортинвентарь фабрикинче январь уйӑхӗнче 1 çын, февральте — 5 çын, чугунçул çинче ӗçлекенсем хушшинче январь уйӑхӗнче 1 çын, февраль уйӑхӗнче 3 çын прогул тунӑ.

Пренире тухса калакансем хушшинче ялти коммунистсем сахалтарах пулчӗç.

Пуху XVIII партконференцин решенийӗсене ырласа, вӗсене ӗç программи вырӑнне йышӑнчӗ.

Т. КОЖИН.

ВӐРНАР

Çак кунсенче районри парторганизацин пухӑвӗ партин Пӗтӗм Союзри XVIII конференцин итогӗсем тата малашнехи задачӑсем çинчен сӳтсе-яврӗ. Ку ыйтупа парти райкомӗн секретарӗ Сергеев юлташ доклад туса пачӗ.

— XVIII партконференцинче, — терӗ Сергеев юлташ,—Маленков юлташ кӑтартса панӑ çитменлӗхсем вӗсем пирӗн районри парторганизацине те тивеççӗ, вӗсем пирӗн ӗçре те пур. Эпир ку вӑхӑтчен ялхуçалӑхӗпе ытларах ӗçленӗ, промышленноçпа транспорт ӗçӗ çине сахал çаврӑнса пӑхнӑ. Малашне парторганизацисен промышленноçпа та, ялхуçалӑхӗпе те пӗр пекех ӗçлемелле. Пӗринпе ытларах ӗçлесе, теприне манса хӑвармалла мар.

Малалла Сергеев юлташ районри промышленноçӑн тата транспортӑн иртнӗ çулхи ӗçӗсем çинчен каласа пачӗ. Пӗлтӗр чылай предприятисем хӑйсен планӗсене тултарайман. Продукцин хӑйне ларакан хакне йӳнетес чухне вӑл ӳссе пыни курӑнать. Акӑ, вӑрманпромхоз хатӗрлекен пӗр фестметр вутӑ 12 тенкӗ те 73 пуса лармалла пулсан, 15 тенкӗ те 73 пуса ларнӑ.

Фосфорит завочӗ пӗлтӗрхи плана 62 процент ытларах çеç тултарнӑ. 1940 çулта продукцийӗн хӑйне ларакан хакӗ 29 процент таран ӳснӗ. Чугунçул станци те йӗркеллӗн ӗçлеймен. Обозоремонтнӑй мастерской иртнӗ çулти плана 58 процент, «Труд» артель—88 процент кӑна тултарнӑ.

«Красный кустарь» тата «Скороход» артельсем продукци туса кӑларассине хисеп енчен начар мар ӗçленӗ, анчах продукци пахалӑхӗ начар пулнӑ.

Çак çитменлӗхсем вӗсем пуçламӗш парторганизацисемпе предприятисен руководителӗсем производство ыйтӑвӗсемпе сахал интересленнинчен килнӗ. Предприятисемпе артельсен руководителӗсем ытларах сӳпӗлтетнӗ, приказсем тӑрӑх ӗçлеме пӑхнӑ. Фосфорит завочӗн директорӗ Александров юлташ 1940 çулта 175 приказ, кӑçал икӗ уйӑх хушшинче 22 приказ çырнӑ. Анчах çав приказсем пурнӑçланса пынине сахал тӗрӗсленӗ.

Доклад тӑрӑх пренире 17 çын тухса каларӗç. Фосфорит завочӗн директорӗ Александров юлташ XVIII партконференци хыççӑн ӗçсем лайӑхланма пуçлани çинчен каларӗ. Завод февраль уйӑхӗнчи плана 104 процент ытларах тултарнӑ, график тӑрӑх ӗçлеме тытӑннӑ. Завод кашни кунхи график тӑрӑх плана 130—170 процент тултарса ӗçлет. Анчах, çакӑ вӑл малтанхи утӑм çеç. Заводӑн оборудованисемпе туллин усӑ курас, продукци пахалӑхне лайӑхлатас тата тасалӑхпа йӗркелӗх тӑвас тӗлӗшпе нумай ӗçлемелле.

Пренире тухса калакансем уйрӑм предприятисен, çавӑн пекех пуçламӗш парторганизацисен тата парти райкомӗн ӗçӗсене хытӑ критиклерӗç.

Коммунистсен пухӑвӗ XVIII партконференци решенийӗсене ырларӗ, çав решенисене тӗплӗн пурнӑça кӗртсе пыма татӑклӑ мероприятисем палӑртрӗ.

В. ЦЫПЛЕНКОВ.

* * *

Хут вӗрентессине манӑçа хӑварнӑ

Çак иртнӗ кунсенче Сталинӑри (Çӗрпӳ районӗ) туллимар вӑтам шкулти учительсен канашлӑвӗ пулчӗ. Канашлура ялта хутла пӗлмен çынсене вӗрентес ӗç мӗнле пыни çинчен калаçрӗç.

Ку таринччен учительсен кашнинех хутла пӗлменнисене икшер çын вӗрентмелле пулнӑ. Хӑш учителӗн кама вӗрентмеллине те çирӗплетсе панӑ. Анчах учительсем ку ӗçе тытӑнман. Хутла пӗлмен çынсене вӗрентме мар, вӗсен ячӗсене те пӗлмеççӗ.

Канашлура учительсем хутла пӗлменнисене шкула пухса вӗрентме пулчӗç.

А. МИХЕЕВ.

ССР СОЮЗĔН ХАЛĂХ КОМИССАРĔСЕН СОВЕЧĔ ЙЫШĂННĂ

ПОСТАНОВЛЕНИ

Искусство тата литература енĕпе тунă калама çук чаплă ĕçсемшĕн Сталинла премисем парасси çинчен

Юлашки 6—7 çул хушшинче искусство тата литература енĕпе тунă калама çук чаплă ĕçсемшĕн Сталинла премисем парасси çинчен ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1939 çулти декабрĕн 20-мĕшĕнче тата 1940 çулти декабрĕн 20-мĕшĕнче йышăннă постановленисене пурнăçа кĕртсе, ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ **çапла йышăнать:**

Çак енсемпе тунă калама çук чаплă ĕçсемшĕн Сталинла премисем парас:

А. МУЗЫКА.

Пĕрремĕш степеньлĕ премисем 100 пин тенкĕ.

1. Николай Яковлевич **Мясковскине**—РСФСР искусствăсен тава тивĕçлĕ деятельне, Государствăн Мускаври П. И. Чайковский ячĕпе тăракан консерватори профессорне, 1940 çултанпа лартакан 21-мĕш симфонишĕн.

2. Юрий Александрович **Шапорина**—Государствăн Мускаври П. И. Чайковский ячĕпе тăракан Консерватори профессорне, 1939 çултанпа лартакан «На поле Куликовом» ятлă симфони-кантатăшăн.

3. Дмитрий Дмитриевич **Шостановича**—Государствăн Ленинградри Ленин орденлĕ Консерватори профессорне, 1940 çултанпа лартакан фортепианнăй квинтетшăн.

Иккĕмĕш степеньлĕ премисем 50 пин тенкĕ.

1. Анатолий Васильевич **Богатырева,** Государствăн Белоруссири Ленин орденлĕ оперăпа балет театрĕн сцени çинче 1940 çулта лартса панă «В пущах Полесья» ятлă оперăшăн.

2. Узеир **Гаджибекова,** СССР халăх артистне, Государствăн Азербайджанри Консерватори профессорне, 1937 çулта сцена çинче лартса панă «Кер-Оглы» оперăшăн

3. Григорий Варфоломеевич **Киладзене**—1936 çултанпа лартакан «Отшельник» ятлă симфониллĕ поэмăшăн.

4. Лев Николаевич **Ревуцкине** — Государствăн Киеври Консерватори профессорне, 1940 çултанпа лартакан 2-мĕш симфонишĕн.

5. Арам Ильич **Хачатуряна**—Армян ССР Искусствăсен тава тивĕçлĕ деятельне, 1940 çултанпа лартакан скрипка концерчĕшĕн.

Б. ЖИВОПИСЬ.

Пĕрремĕш степеньлĕ премисем 100 пин тенкĕ.

1. Александр Михайлович **Герасимова**—РСФСР искусствăсен тава тивĕçлĕ деятельне, 1938 çулта туса пĕтернĕ «Сталин и Ворошилов в Кремле» картинăшăн.

2. Борис Владимирович **Иогансона**—Пĕтĕм Российăри Художествăсен Академийĕн профессорне, 1937 çулта туса пĕтернĕ «На старом Уральском заводе» картинăшăн.

3. Михаил Васильевич **Нестерова** — живопиç академикне, И. П. Павлов академикăн портречĕшĕн, ăна 1935 çулта туса пĕтернĕ.

Иккĕмĕш степеньлĕ премисем 50 пин тенкĕ.

1. Василий Петрович **Ефанова**—1938 çулта туса пĕтернĕ «Незабываемая встреча» ятлă картинăшăн.

2. Николай Семенович **Самокиша** — живопиç академикне, 1935 çулта туса пĕтернĕ «Переход через Сиваш» картинăшăн.

3. Мартирос Сергеевич **Сарьяна** — Армян ССР халăх художникне, Спендиаровăн «Алмаст» оперине илемлетнĕшĕн, вăл оперăна Ереванри Ленин орденлĕ оперăпа балет театрĕн сцени çинче 1939 çулта лартса панă.

4. Ираклий Моисеевич **Тоидзене** — Шота Руставелин «Витязь в тигровой шкуре» поэмине иллюстрациленĕшĕн, ку ĕçе вăл 1937 çулта тунă.

5. Федор Федорович **Федоровскине**—Бородинăн «Князь Игорь» оперине илемлетнĕшĕн, вăл оперăна Государствăн Ленин орденлĕ Академиллĕ Пысăк театрĕн сцени çинче 1934 çулта лартса панă.

В. СКУЛЬПТУРА.

Пĕрремĕш степеньлĕ премисем 100 пин тенкĕ.

1. Сергей Дмитриевич **Меркурова** — Армян ССР искусствăсен тава тивĕçлĕ деятельне, И. В. Сталинăн Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкине лартма тунă скульптурăллă фигуришĕн (1940 ç.) тата В. И. Ленинăн СССР Верховный Совет ларăвĕсен залне лартма тунă скульптурăллă фигуришĕн.

2. Вера Игнатьевна **Мухинăна**—1937 çулта туса пĕтернĕ «Рабочий и колхозник» скульптурăшăн.

Иккĕмĕш степеньлĕ премисем 50 пин тенкĕ.

1. Владимир Иосифович **Ингала** тата Вениамин Яковлевич **Боголюбова** — С. Орджоникидзен скульптурăллă фигуришĕн, ăна 1937 çулта туса пĕтернĕ.

2. Силован Якимович **Какабадзене**—Сталин юлташăн монуменчĕшĕн, ăна Тбилиси хулинче 1939 çулта туса лартнă.

3. Матвей Генрихович **Манизера** — РСФСР искусствăсен тава тивĕçлĕ деятельне, Пĕтĕм Российăри Художествăсен Академийĕн профессорне, Ульяновск хулинче 1940 çулта лартнă В. И. Ленин памятникĕшĕн.

4. Николай Васильевич **Томскине** — Ленинград хулинче 1939 çулта лартнă С. М. Киров памятникĕшĕн.

Г. АРХИТЕКТУРА.

Пĕрремĕш степеньлĕ премисем 100 пин тенкĕ.

1. Владимир Игнатьевич **Заболотныя**—УССР Верховный Совечĕн Киев хулинчи çурчĕн архитектурăллă проекчĕшĕн, вăл çурта 1939 çулта туса лартнă.

2. Дмитрий Николаевич **Чечулина** — Мускаври Л. М. Каганович ячĕпе тăракан метрополитенăн «Киевская» тата «Комсомольская площадь» станцийĕсен архитектурăллă проекчĕсемшĕн, вăл станцисене 1935—1938 çулсенче тунă.

3. Алексей Викторович **Щусева** — архитектура академикне, Маркс—Энгельс—Ленин Институчĕн Тбилиси хулинчи çурчĕн архитектурăллă проекчĕшĕн, вăл çурта 1938 çулта тунă.

Иккĕмĕш степеньлĕ премисем 50 пин тенкĕ.

1. Алексей Николаевич **Душкина** тата Яков Григорьевич **Лихтенберга**—Мускаври Л. М. Каганович ячĕпе тăракан метрополитенăн «Дворец Советов» станцин архитектурăллă проекчĕшĕн, вăл станцине 1935 çулта тунă.

2. Борис Михайлович **Иофана**—архитектура академикне, 1937 çулта Парижре пулнă выставкăн совет павильонĕн çурчĕн архитектурăллă проекчĕшĕн.

3. Садых Алесперович **Дадашева** тата Микаэль Алеекерович **Усейнова**—Мускав хулинче пулнă Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкинче Азербайджан ССР павильонĕн архитектурăллă проекчĕшĕн, вăл павильона 1939 çулта тунă.

4. Арчил Григорьевич **Курдианине**—Мускав хулинче пулнă Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкинче Грузин ССР павильонĕн архитектурăллă проекчĕшĕн, вăл павильона 1939 çулта тунă.

5. Аркадий Григорьевич **Мордвинова,** архитектура академикне тата Григорий Павлович **Гольца**—архитектура академикне, Мускав хулинчи Калужская урамĕнче 1940 çулта туса лартнă пурăнмалли çуртсен архитектурăллă проекчĕсемшĕн.

Д. ТЕАТРПА ДРАМА ИСКУССТВИ.

Пĕрремĕш степеньлĕ премисем 100 пин тенкĕ.

1. Алла Константиновна **Тарасовăна**—СССР халăх артисткине, ССР Союзĕн Мускаври Ленин орденлĕ тата Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ художествăллă академи театрĕн артисткине, театрпа драма искусстви енĕпе тунă калама çук пысăк çитĕнӳсемшĕн.

2. Акакий Алексеевич **Хоравана** — СССР халăх артистне, Тбилисири Руставели ячĕпе тăракан театр артистне, театрпа драма искусстви енĕпе тунă калама çук чаплă çитĕнӳсемшĕн.

3. Николай Павлович **Хмелева** — СССР халăх артистне, ССР Союзĕн М. Горький ячĕпе тăракан Ленин орденлĕ тата Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ художествăллă академи театрĕн артистне, театрпа драма искусстви енĕпе тунă калама çук чаплă çитĕнӳсемшĕн.

Иккĕмĕш степеньлĕ премисем 50 пин тенкĕ.

1. Мария Ивановна **Бабановăна** — РСФСР тава тивĕçлĕ артисткине, Мускаври Революци театрĕн артисткине, театрпа драма искусстви енĕпе тунă пысăк çитĕнӳсемшĕн.

2. Амвросий Максимилианович **Бучмана**—УССР халăх артистне, Киеври Франко ячĕпе тăракан Ленин орденлĕ драма театрĕн артистне, театрпа драма искусстви енĕпе тунă пысăк çитĕнӳсемшĕн.

3. Вагарш Богданович **Вагаршяна** — Армян ССР халăх артистне, Государствăн Ереванри Сундукян ячĕпе тăракан театр артистне, театрпа драма искусстви енĕпе тунă пысăк çитĕнӳсемшĕн.

4. Глеб Павлович **Глебова**—БССР халăх артистне, Государствăн Белоруссири пĕрремĕш драма театрĕн артистне, театрпа драма искусстви енĕпе тунă пысăк çитĕнӳсемшĕн.

5. Константин Васильевич **Скоробогатова**—РСФСР халăх артистне, Ленинградри Пушкин ячĕпе тăракан Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ академи театрĕн артистне, театрпа драма искусстви енĕпе тунă пысăк çитĕнӳсемшĕн.

Е. ОПЕРА ИСКУССТВИ.

Пĕрремĕш степеньлĕ премисем 100 пин тенкĕ.

1. Валерия Владимировна **Барсовăна**—СССР халăх артисткине, СССР Государство Ленин орденлĕ Академиллĕ Пысăк театрĕн артисткине, театрпа вокальнăй искусство енĕпе тунă калама çук чаплă çитĕнӳсемшĕн.

2. Максим Дормидонтович **Михайлова**—СССР халăх артистне, СССР Государство Ленин орденлĕ Академиллĕ Пысăк театрĕн артистне, театрпа вокальнăй искусство енĕпе тунă калама çук чаплă çитĕнӳсемшĕн.

3. Марк Осипович **Рейзена**—СССР халăх артистне, СССР Государство Ленин орденлĕ Академиллĕ Пысăк театрĕн артистне, театрпа вокальнăй искусство енĕпе тунă калама çук чаплă çитĕнӳсемшĕн.

4. Иван Семенович **Козловскине** — СССР халăх артистне, СССР Государство Ленин орденлĕ Академиллĕ Пысăк театрĕн артистне, театрпа вокальнăй искусство енĕпе тунă калама çук чаплă çитĕнӳсемшĕн.

Иккĕмĕш степеньлĕ премисем 50 пин тенкĕ.

1. Лариса Помпеевна **Александровскаяна**—СССР халăх артисткине, Белоруссири Ленин орденлĕ оперăпа балет театрĕн артисткине, театрпа вокальнăй искусство енĕпе тунă пысăк çитĕнӳсемшĕн.

2. Зоя Михайловна **Гайдайа**—УССР халăх артисткине, Киеври Шевченко ячĕпе тăракан Ленин орденлĕ оперăпа балет театрĕн артисткине, театрпа вокальнăй искусство енĕпе тунă пысăк çитĕнӳсемшĕн.

3. Сергей Яковлевич **Лемешева** — РСФСР тава тивĕçлĕ артистне, СССР Государство Ленин орденлĕ Академиллĕ Пысăк театрĕн артистне, театрпа вокальнăй искусство тата кино искусстви енĕпе тунă пысăк çитĕнӳсемшĕн.

4. Арий Моисеевич **Пазовскине** — СССР халăх артистне,—Ленинградри С. М. Киров ячĕпе тăракан Ленин орденлĕ оперăпа балет театрĕн сцени çинче 1939 çулта Глинкăн «Иван Сусанин» оперине лартнăшăн.

5. Самуил Абрамович **Самосуде** — СССР халăх артистне,—СССР Государство Ленин орденлĕ Академиллĕ Пысăк театрĕн сцени çинче 1939 çулта Глинкăн «Иван Сусанин» оперине лартнăшăн.

6. Наталья Дмитриевна **Шпиллера,** СССР Государство Ленин орденлĕ Академиллĕ Пысăк театрĕн артисткине, театрпа вокальнăй искусство енĕпе тунă пысăк çитĕнӳсемшĕн.

Ж. БАЛЕТ ИСКУССТВИ.

Пĕрремĕш степеньлĕ премисем 100 пин тенкĕ.

1. Ольга Васильевна **Лепешинскаяна**—СССР Государство Ленин орденлĕ Академиллĕ Пысăк театрăн балет артисткине—балет искусстви енĕпе тунă калама çук чаплă çитĕнӳсемшĕн.

2. Галина Сергеевна **Улановăна** — РСФСР халăх артисткине, Ленинградри С. М. Киров ячĕпе тăракан Ленин орденлĕ оперăпа балет театрĕн балет артисткине, балет искусстви енĕпе тунă калама çук чаплă çитĕнӳсемшĕн.

3. Вахтанг Михайлович **Чабукианине**—РСФСР искусствăсен тава тивĕçлĕ деятельне, Ленинградри С. М. Киров ячĕпе тăракан Ленин орденлĕ оперăпа балет театрĕн балет артистне, балет искусстви енĕпе тунă калама çук чаплă çитĕнӳсемшĕн.

Иккĕмĕш степеньлĕ премисем 50 пин тенкĕ.

1. Наталия Михайловна **Дудинскаяна**—РСФСР тава тивĕçлĕ артисткине, Ленинградри С. М. Киров ячĕпе тăракан Ленин орденлĕ оперăпа балет театрĕн балет артисткине, балет искусстви енĕпе тунă пысăк çитĕнӳсемшĕн.

2. Асаф Михайлович **Мессерера** — РСФСР тава тивĕçлĕ артистне, СССР Государство Ленин орденлĕ Академиллĕ Пысăк театрăн балет артистне, балет искусстви енĕпе тунă пысăк çитĕнӳсемшĕн.

3. Марина Тимофеевна **Семеновăна,** РСФСР тава тивĕçлĕ артисткине, СССР Государство Ленин орденлĕ Академиллĕ Пысăк театрăн балет артисткине, балет искусстви енĕпе тунă пысăк çитĕнӳсемшĕн.

4. Юрий Федорович **Файера**—РСФСР халăх артистне, СССР Государство Ленин орденлĕ Академиллĕ Пысăк театрăн дирижерне—балетсем лартнă чух дирижер ĕçне пысăк мастерлăхпа туса пынăшăн.

5. Тамара **Ханума**—Узбек ССР халăх артисткине, халăх ташшисене пысăк мастерлăхпа ташланăшăн.

З. КИНЕМАТОГРАФИ ТĂРĂХ.

Пĕрремĕш степеньлĕ премисем 100 пин тенкĕ.

1. Григорий Васильевич **Александрова,** режиссера, РСФСР искусствăсен тава тивĕçлĕ деятельне; Любовь Петровна **Орловăна,** РСФСР тава тивĕçлĕ артисткине тата Исаак Осипович **Дунаевскине,** РСФСР искусствăсен тава тивĕçлĕ деятельне, композитора, Игорь Владимирович **Ильинскине,** артиста — 1936 çулта тухнă «Цирк» тата 1938 çулта тухнă «Волга-Волга» кинокартинăсемшĕн.

2. Сергей Дмитриевич **Васильева,** режиссера, РСФСР искусствăсен тава тивĕçлĕ деятельне, Георгий Николаевич **Васильева,** режиссера, РСФСР искусствăсен тава тивĕçлĕ деятельне тата Борис Андреевич **Бабочкина,** РСФСР халăх артистне—1934 çулта тухнă «Чапаев» кинокартинăшăн.

3. Александр Петрович **Довженкона,** режиссера, УССР искусствăсен тава тивĕçлĕ деятельне, Евгений Валериановичн **Самойлова** тата Иван Федорович **Скуратова,** артистсене—1939 çулта тухнă «Щорс» кинокартинăшăн.

4. Григорий Михайлович **Козинцева,** режиссера, Леонид Захарович **Трауберга,** режиссера тата Борис Петрович **Чиркова,** РСФСР тава тивĕçлĕ артистне — 1935—1939 çулсенче тухнă «Юность Максима», «Возвращение Максима» тата «Выборгская сторона» кинокартинăсемшĕн.

5. Михаил Ильич **Ромма,** режиссера, РСФСР искусствăсен тава тивĕçлĕ деятельне, Алексей Якволевич **Каплера,** кинодраматурга, Борис Васильевич **Цукина,** СССР халăх артистне тата Николай Павлович **Охлопкова,** артиста—1937 çулта тухнă «Ленин в Октябре» тата 1939 çулта тухнă «Ленин в 1918 году» кинокартинăсемшĕн.

6. Владимир Михайлович **Петрова,** режиссера, РСФСР тава тивĕçлĕ артистне, Николай Константинович **Симонова,** РСФСР халăх артистне тата Михаил Иванович **Жарова,** РСФСР халăх артистне—1937 тата 1939 çулсенче тухнă «Петр I» кинокартинăсемшĕн (1-мĕшпе 2-мĕш серисем).

7. Всеволод Илларионович **Пудовкина,** режиссера, РСФСР искусствăсен тава тивĕçле деятельне, Михаил Иванович **Доллера,** режиссера, Борис Николаевич **Ливанова,** РСФСР халăх артистне, Александр Александрович **Ханова,** артиста тата Николай Петрович **Черкасова** (Сергеева), артиста—1939 çулта тухнă «Минин и Пожарский» тата 1940 çулта тухнă «Суворов» кинокартинăсемшĕн.

8. Иван Александрович **Пырьева,** режиссера, Николай Афанасьевич **Крючкова,** артиста тата Марина Алексеевна **Ладынинăна,** артисткăна—1939 çулта тухнă «Трактористы» кинокартинăшăн.

9. Михаил Эдишеровичу **Чиаурелине,** режиссера, Грузин ССР искусствăсен тава тивĕçлĕ деятельне, Михаил Георгиевич **Гелованине,** артиста тата Спартак Деванович **Багашвилине,** артиста—1937 çулта тухнă «Арсен» тата 1938 çулта тухнă «Великое зарево» кинокартинăсемшĕн.

10. Сергей Михайлович **Эйзенштейна,** режиссера, РСФСР искусствăсен тава тивĕçлĕ деятельне, Петр Андреевич **Павленкона,** кинодраматурга, Николай Константинович **Черкасова,** РСФСР халăх артистне тата Андрей Львович **Абрикосова**—1938 çулта тухнă «Александр Невский» кинокартинăшăн.

Композитор Д. Д. Шостакович.

Кино-режиссер Фридрих Эрмлер.

Иккĕмĕш степеньлĕ премисем 50 пин тенкĕ.

1. Амо Иванович **Бек-Назарова,** режиссера, Армян ССР халăх артистне, Грачай **Нерсесяна,** Армян ССР халăх артистне тата Авет **Аветесяна,** Армян ССР халăх артистне—1938 çулта тухнă «Зангезур» кинокартинăшăн.

2. Василий Николаевич **Беляева,** режиссера, Владимир Семенович **Ешурина,** Соломон Яковлевич **Когана,** Филипп Иванович **Печула,** хроника операторĕсене тата Алексей Николаевич **Соколовскине,** хроника операторĕн ассистентне,—1940 çулта тухнă «Линия Маннергейма» кинокартинăшăн.

3. Сергей Апполинариевич **Герасимова,** режиссера тата Тамара Федоровна **Макаровăна,** артисткăна—1939 çулта тухнă «Учитель» кинокартинăшăн.

4. Ефим Львович **Дзигана,** режиссера, Дмитрий Яковлевич **Покрасса,** композитора—1936 çулта тухнă «Мы из Кронштадта» тата 1938 çулта тухнă «Если завтра война» кинокартинăсемшĕн.

5. Марк Семенович **Донскоя,** режиссера тата Варвара Осиповна **Массалитиновăна,** РСФСР халăх артисткине—1938 çулта тухнă «Детство Горького» тата 1939 çулта тухнă «В людях» кинокартинăсемшĕн.

6. Александр Михайлович **Згуридине,** режиссера, Михаил Георгиевич **Пискунова** тата Глеб Александрович **Трояновскине,** операторсене, Владимир Николаевич **Лебедева** тата Петр Александрович **Мантейфиле,** консультантсене — 1939 çулта тухнă «В глубинах моря» тата 1940 çулта тухнă «Сила жизни» кинокартинăсемшĕн.

7. Евгений Александрович **Иванов-Баркова,** режиссера, Нина Ивановна **Алисовăна,** артисткăна тата Алта **Корлиевăна,** артисткăна—1940 çулта тухнă «Дурсун» кинокартинăшăн.

8. Александр Викторович **Ивановскине,** режиссера, РСФСР искусствăсен тава тивĕçлĕ деятельне, Зоя Алексеевна **Федоровăна,** артисткăна тата Эраст Павлович **Гарина,** артиста—1940 çулта тухнă «Музыкальная история» кинокартинăшăн.

9. Илья Петрович **Копалина** тата Иосиф Михайлович **Посельскине,** режиссерсене, Николай Васильевич **Богомолова,** Александр Петрович **Ковальчука,** Абрам Григорьевич **Кричевскине,** Всеволод Львович **Ковальчука,** Виктор Александрович **Штатланда,** Аркадий Менделевич **Шафрана,** Марк Борисович **Койфмана,** Абрам Наумович **Козакова,** хроника операторĕсене—1940 çулта тухнă «На Дунае» кинокартинăшăн.

10. Леонид Давыдович **Лукова,** режиссера тата Павел Филиппович **Цилина,** кинодраматурга—1940 çулта тухнă «Большая жизнь» кинокартинăшăн.

11. Юлий Яковлевич **Райзмана,** режиссера, Иван Романович **Пельтцера,** РСФСР тава тивĕçлĕ артистне тата Николай Иванович **Дорохова,** РСФСР тава тивĕçлĕ артистне — 1937 çулта тухнă «Последняя ночь» кинокартинăшăн.

12. Иосиф Ефимович **Хейфеца,** режиссера тата Александр Григорьевич **Зархине,** режиссера — 1937 çулта тухнă «Депутат Балтики» кинокартинăшăн.

13. Николай Михайлович **Шенгелая,** Грузин ССР искусствăсен тава тивĕçлĕ деятельне тата Наталия Георгиевна **Вачнадзене,** Грузин ССР халăх артисткине — 1936 çулта тухнă «Элисо» тата 1937 çулта тухнă «Золотая долина» кинокартинăсемшĕн.

14. Фридрих Маркович **Эрмлера,** режиссера, РСФСР искусствăсен тава тивĕçлĕ деятельне, Александр Иванович **Зражевскине,** РСФСР тава тивĕçлĕ артистне тата Николай Иванович **Боголюбова,** артиста — 1938 тата 1939 çулсенче тухнă «Великий гражданин» кинокартинăшăн (1-мĕшпе 2-мĕш серисем).

15. Сергей Иосифович **Юткевича,** режиссера, РСФСР искусствăсен тава тивĕçлĕ деятельне тата Леонид Соломонович **Любошевскине,** РСФСР тава тивĕçлĕ артистне — 1940 çулта тухнă «Свердлов» кинокартинăшăн.

И. ХУДОЖЕСТВĂЛЛĂ ПРОЗА.

Пĕрремĕш степеньлĕ премисем 100 пин тенкĕ.

1. Алексей Николаевич **Толстоя,** СССР Наукăсен Академийĕн действительнăй членне — «Петр первый» романшăн.

2. Сергей Николаевич **Сергеев-Ценскине** — 1939—1940 çулсенче пичетленсе тухнă «Севастопольская страда» романшăн.

3. Михаил Александрович **Шолохова,** СССР Наукăсен Академийĕн действительнăй членне — 1940 çулта пичетленсе тухнă «Тихий Дон» романшăн.

Иккĕмĕш степеньлĕ премисем 50 пин тенкĕ.

1. Николай Евгеньевич **Виртана** — 1935 çулта пичетленсе тухнă «Одиночество» романшăн.

2. Леон Михайлович **Киачелине** — 1938 çулта грузин чĕлхипе тата 1939 çулта вырăс чĕлхипе пичетленсе тухнă «Гвади-Бигва» романшăн.

3. Алексей Силыч **Новиков-Прибоя**—1935 çулта пичетленсе тухнă «Цусима» романшăн (II-мĕш пайĕ).

К. ПОЭЗИ.

Пĕрремĕш степеньлĕ премисем 100 пин тенкĕ.

1. Николай Николаевич **Асеева**—1940 çулта пичетленсе тухнă «Маяковский начинается» поэмăшăн.

2. Иван Доменикович **Купалана** — 1940 çулта пичетленсе тухнă «От сердца» ятлă сăвăсен сборникĕшĕн.

3. Павел Григорьевич **Тычинăна,** УССР Наукăсен Академийĕн членне — 1938 çулта пичетленсе тухнă «Чувство единой семьи» ятлă сăвăсен сборникĕшĕн.

Иккĕмĕш степеньлĕ премисем 50 пин тенкĕ.

1. **Джамбул Джабаева** — Казах ССР халăх поэтне, пуринпĕн те паллă поэзиллĕ произведенисемшĕн.

2. Василий Иванович **Лебедев-Кумача** — пуринпĕн те паллă юрăсен сăмахĕсемшĕн.

3. Георгий Николаевич **Леонидзене**—1939 çулта пичетленсе тухнă «Детство вождя» поэмăшăн.

4. Сергей Владимирович **Михалкова**—ачасем валли çырнă сăвăсемшĕн.

5. Александр Трифонович **Твардовскине** — 1936 çулта пичетленсе тухнă «Страна Муравия» поэмăшăн.

Л. ДРАМАТУРГИ.

Пĕрремĕш степеньлĕ премисем 100 пин тенкĕ.

1. Константин Андреевич **Тренева**—çĕнĕрен редакцилесе 1937 çулта лартнă «Любовь Яровая» пьесăшăн.

2. Александр Евдокимович **Корнейчука** — 1936 тата 1939 çулсенче лартнă «Платон Кречет» тата «Богдан Хмельницкий» пьесăсемшĕн.

3. Николай Федорович **Погодина** — 1937 çулта лартнă «Человек с ружьем» пьесăшăн.

Иккĕмĕш степеньлĕ премисем 50 пин тенкĕ.

1. Самад Вургуна — 1939 çулта лартнă «Вагиф» пьесăшăн.

2. Кондрат Кондратьевич **Крапивăна**—1939 çулта лартнă «Кто смеется последним» пьесăшăн.

3. Владимир Александрович **Соловьева** — 1940 çулта лартнă «Фельдмаршал Кутузов» пьесăшăн.

М. ЛИТЕРАТУРА КРИТИКИ.

Пĕрремĕш степеньлĕ премисем 100 пин тенкĕ.

1. Игорь Эммануилович **Грабаре** — искусствăсен тава тивĕçлĕ деятельне, профессора, 1937 çулта пичетленсе тухнă «Репин» ятлă кĕнекешĕн.

АСĂРХАТТАРНИ:

ССР Союзĕн Совнаркомĕ «Наука, изобретенисем, литература тата искусство тăрăх Сталинла премисем памалли йĕркене улăштарасси çинчен» 1940 çулти декабрĕн 20-мĕшĕнче йышăннă постановленине кăштах улăштарса, ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çак постановленире калама çук чаплă ĕçсемшĕн Сталинла премисене çакăн чухлĕ хуша пачĕ:

Опера искусстви енĕпе
пĕрремĕш степеньлĕ пĕр преми,
иккĕмĕш степеньлĕ 10 преми.

Кинематографи енĕпе
пĕрремĕш степеньлĕ 7 преми,
иккĕмĕш степеньлĕ 10 преми.

Литература енĕпе
проза тăрăх — иккĕмĕш степеньлĕ 2 преми,
поэзи тăрăх — иккĕмĕш степеньлĕ 3 преми,

Драматурги енĕпе
иккĕмĕш степеньлĕ 3 преми.

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн
Председателĕ ***В. МОЛОТОВ.***

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Ĕçĕсен
Управляющийĕ ***Я. ЧАДАЕВ.***

Мускав, Кремль.
1941 çулти мартăн 15-мĕш.

Европăри тата Африкăри вăрçă

(Вăрçă ĕçĕсен дневникĕ)

Рейтер агентствин корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: Итали войскисем Албанири фронтăн центральнăй секторĕнче пуçланă наступлени ăнăçсăр пулнă. Çак наступлени 7 куна пынă, унта 120 пин çын хутшăннă. Фронтра пур çĕрте те, уйрăмăнах операцисен тĕп зони пулса тăракан Тепелене — Клисура секторĕнче, тет Югославири «Време» хаçат, итальянецсем çапăçăва çĕнĕ, лайăх хатĕрленнĕ чаçсене кĕртнĕ пулсан та, фронтра нимĕнле палла улшăнусем те пулман. Итальянецсем, тесе пĕлтерет Грецири телеграф агентстви, пĕр метр территори те туртса илеймен. Греци войскисем, пĕрмаях контратакăсем туса, 3 пин çынна тыткăна илнĕ, вĕсем хушшинче офицерсем те нумай. Мартăн 15-мĕшпе 16-мĕшĕнче, тенĕ Итали сводкинче, фронтăн пур участокĕсенче те пысăк мар çапăçусем пулса иртнĕ, разведка тăвакан отрядсемпе артиллери ĕçĕсем пулнă. Итали самолечĕсем Хĕвеланăç Пелопоннесри пĕр порт çине, Греци авиацийĕн паха бази çине бомбăсем пырса пăрахнă тата Греци войскисем пухăнса тăнă вырăнсене гранатăсем пăрахнă. Грецири телеграф агентстви пĕлтернĕ тăрăх, мартăн 16-мĕшĕнче Афины хулинче самолетсенчен сыхланма тревога панă. Англипе Греци авиацийĕ Валона çине бомбăсем пырса пăрахнă тата Итали авиацийĕн пĕр бази çине пырса тапăннă.

Мальта утравĕ çине халĕ те Германи авиацийĕ пыра-пыра тапăнать.

* * *

Англипе Германи хушшинчи фронтра халичченхи пекех Германи авиацийĕн активлăхĕ палăрать, анчах та унăн ĕçĕсем халичченхинчен пĕчĕкрех. Германи командованийĕн сводкинче пĕлтернĕ тăрăх, ыран мартăн 16-мĕш тенĕ чух çĕрле Германи бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕ Лондонри пысăк та кирлĕ объектсем çине, Кăнтăр Англири аэродромсемпе портсен сооруженийĕсем çине бомбăсем пырса пăрахнă. Çав каçах Англи самолечĕсем Хĕвеланăç Германири хăшпĕр пунктсем çине бомбăсем пырса пăрахнă. Ыран мартăн 17-мĕш тенĕ чух çĕрле Германи авиацийĕ Бристольпа Эвонмутри портсен сооруженийĕсемпе доксем çине вăйлăн бомбăсем пырса пăрахнă. Германи командованийĕн сводкинче каланă тăрăх, Германи самолечĕсем çавăн пекех Портсмут çине те бомбăсем пырса пăрахнă. Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Германи самолечĕсем Бристоль çине темиçе сехет хушши пыра-пыра тапăннă.

* * *

Çурçĕр Африкăра, тенĕ Итали сводкинче, Алжедаби районĕнче (Бенгазирен кăнтăр енче) Германи авиацийĕн соединенийĕсем мартăн 15—16-мĕшсенче англичансен пĕр çĕре пухăннă грузовикĕсем çине бомбăсем пырса пăрахнă.

Хĕвелтухăç Африкăра пысăк çапăçусемех пулман. Чи пысăк çапăçусем Керен районĕнче (Эритрея) пулса иртнĕ. Итали сводкинче каланă тăрăх, çак районра англичансем мартăн 15-мĕшпе 16-мĕшĕнче пуçланă наступленине сирсе янă, англичансене пысăк çухатусем кӳнĕ.

Англин Çывăхри Хĕвелтухăçĕнчи командованийĕ кăларнă коммюникере каланă тăрăх, Кăнтăр Абиссинире Англи войскисем пур çĕрте те малалла кайса пыраççĕ.

Мартăн 17-мĕш. (ТАСС).

Гитлер выступленийĕ

БЕРЛИН, мартăн 16-мĕш. (ТАСС). Германири информаци бюровĕ çапла пĕлтерет: тĕнче вăрçинче вилнисене асăнса паян Берлинри арсеналра туса ирттернĕ чаплă ларура Гитлер сăмах тухса каланă.

Хăйĕн сăмахĕн пуçламăшĕнче Гитлер иртнĕ тĕнче вăрçинче вилнисене асăнса каланă. Хальхи вăрçа, тенĕ вăл, Германие Англипе Франция туртса кĕртрĕç. Вăрçă ĕçĕсем çинчен тата Германи çарĕ 1940 çулта тунă çитĕнӳсем çинчен кĕскен каласа панă хыççăн, Гитлер çапла каланă: 1918 çулта Германия çак çитĕнӳсен пĕр пайне кăна тума пултарнă пулсан та, вăл тĕнче вăрçинче çиеле тухнă пулĕччĕ. Хальхи вăхăтра Германи çарĕ хăйĕн составĕпе вооруженийĕ тĕлĕшĕнчен чылай вăйлăрах, 1940 çулта пуçланă ĕçе шанчăклăн туса çитерме хатĕр тăрать. Çак вăрçăра Германие халичченхинчен пысăкрах жертвăсем тума тивнине кăтартса парса, Гитлер Германия çĕнтерессине шанса тăни çинчен каланă.

Кăçалхи хĕлле Германин хĕçпăшаллă вăйĕсене çирĕплетес тĕлĕшпе пысăк ĕç туса ирттернĕ. Хĕллехи уйăхсенче Англи атакисен пĕтĕм вăйĕ пуринчен ытларах Германи союзникне хирĕç пычĕ пулсан, тенĕ Гитлер, паянтан пуçласа Германин хĕçпăшаллă вăйĕсем çак кĕрешĕве çĕнĕрен хутшăнаççĕ. Çак кĕрешӳ мĕнле вĕçленессине нимĕнле пулăшу та улăштарма пултараймасть. Германия, тенĕ Гитлер, пĕлтĕр пуçланă ĕçе вĕçне çитерме хатĕр тăрать.

Рузвельт выступленийĕ

ВАШИНГТОН, мартăн 16-мĕш. (ТАСС). Ĕнер «Шурă çурт корреспонденчĕсен ассоциацийĕ» (Шурă çуртри пресс-конференцире яланах пулакан корреспондентсем) организациленĕ кăнтăрлахи апатра США президенчĕ Рузвельт сăмах тухса каланă.

Конгресс хĕçпăшал тавраçне арендăна е кивçен парасси çинчен калакан закон проектне йышăнни, тенĕ Рузвельт, Пĕрлешӳллĕ Штатсене тĕнĕл держависемпе килĕштерме хăтланнисене йăлтах пĕтерсе лартать. Халĕ ĕнтĕ эпир йышăннă татăклă позици пирки тĕнчере никам та иккĕленме пултараймасть.

Хĕçпăшал тавраçне кивçен е арендăна парасси çинчен калакан закон проектне, тенĕ Рузвельт, мартăн 11-мĕшĕнче кăнтăрла иртсен конгресăн икĕ палати те ырларĕç. Эпĕ çак закона çавăн хыççăн çур сехет иртсен алă пусса çирĕплетрĕм. Тепĕр 5 минутăран эпĕ çийĕнчех кăларса ямалли таварсен спискне ырларăм. Çав таварсенчен нумайĕшĕ çул çинче ĕнтĕ. Мартăн 12-мĕшĕнче эпĕ çĕнĕ материалсем туянма 7 миллиард доллар укçа пама сĕнтĕм, конгресс пире çав ассигнованисемпе хăвăрт усă курма май парать. Пирĕн пĕтĕм шухăш — хăвăртлăхсен ыйтăвĕ çинче. Эпĕ шанатăп, «хăвăртлăхсем» сăмах пирĕн пароль пулса тăрĕ.

Демократи çĕнтерессине шанса тăни çинчен каланă хыççăн, Рузвельт çапла пĕлтернĕ: англичансемпе вĕсен союзникĕсем — грексем—США-ран пароходсем, самолетсем, продовольстви, танксем, орудисем, боеприпассем тата ытти материалсем илеççĕ, тенĕ. Рузвельт çавăн пекех США Китая малашне те пулăшу пама хатĕр тăни çинчен каланă.

Чăваш АСС Республикинчи МТС-сем тракторсене мĕн чухлĕ юсанине кăтартакан СВОДКА

(1941 ç. мартăн 15-мĕшне, процентпа)

МТС ячĕсем	Капитальн. ремонт	Текущий ремонт	Пĕтĕмпе
Улатăр	66,6	22,5	34,8
Элĕк	76,4	76,1	75,0
Вăрнар	100	100	100
Йĕпреç	100	83,3	89,1
Ишлей	66,6	84,8	77,7
Канаш	100	75,8	81,5
Куславкка	70,0	77,7	74,4
Комсомольски	90,0	100	96,9
Хĕрлĕ Чутай	—	100	93,3
Кувакино	90,0	82,8	85,4
Сĕнтĕрвăрри	83,3	55,0	61,5
Первомайски	100	50,0	62,5
Пăрачкав	76,1	80,0	78,7
Сĕнтĕр	80,0	83,3	82,3
Красноармейски	87,5	68,4	74,0
Вăрмар	70,8	72,2	71,6
Çĕрпӳ	88,8	67,5	74,1
Шупашкар	66,6	69,2	68,1
Чкаловски	90,4	72,4	80,0
Шăмăршă	100	100	100
Шăхасан	100	100	100
Çĕмĕрле	80,8	80,9	83,3
Етĕрне	63,6	73,4	70,5
Елчĕк	92,3	81,4	85,5
Тăвай	73,3	68,8	70,4
Республикипе	82,5	77,4	79,1
1941 ç. мартăн 10-мĕшне пулнă:	79,1	73,4	75,4

Трак раз'езчĕн ĕçĕсем

Пирĕн коллектив пысăк мар, анчах вăл пысăк ĕç тăвать. Иртнĕ çулта лайăх ĕçленĕшĕн разъезд начальникĕпе дежурнăй М. Васильев юлташ Нарком премине илме тивĕçлĕ пулчĕç. Кăçал эпир Ишлей разъезчĕпе ăмăртса ĕçлетпĕр.

Разъездăн паха ĕçĕсемшĕн эпир кăна мар, районри организацисем те тăрăшаççĕ. Чугунçула юр хӳсе кайсан çывăхри колхозсенчен темиçе вуншар колхозниксем çула юртан тасатма васкаса тухаççĕ. Уйрăмăнах кăçал Енщик-Чуллă ялсоветĕнчи колхозниксем лайăх ĕçлерĕç. Вĕсем чугунçула юратса пăхса усраççĕ.

Пирĕн разъездри работниксем кунта таварсем тиесе килекен вагонсене вăхăтра пушатса каялла ăсатса ярассишĕн тăрăшаççĕ. Нумаях пулмасть çĕрле, çурçĕр иртсен пĕр сехетре райсоюз валли вагон вутă килчĕ. Простой ан пултăр тесе çак вагона разъезд коллективĕн вăйĕпе вăтăр минута хушшинче пушатса пĕтертĕмĕр, вагона простой тума памарăмăр. Вагонсем кăнтăрла-и, е каçхине килеççĕ-и, эпир вĕсене çийĕнчех, поезд Шупашкартан каялла таврăннă тĕле пушататпăр. Пирĕн патăрта вагонсем простой тумаççĕ.

Иртнĕ çулта пирĕн разъезд 98.947 тенкĕ те 65 пуслăх билет сутнă, урăхла каласан, пирĕн разъезд урлă 16 пин те 805 çын тухса кайнă. Çавăн чухлех Трак разъездне килнĕ. Паллах, çакăн чухлĕ ĕççыннисене кăмăллăн кĕтсе илмелле пулнă, эпир уншăн сахал мар тăрăшнă, тăрăшатпăр.

Партин XVIII конференцийĕ чугунçул транспорчĕн ĕçне татах та ытларах лайăхлатма хушса хăварчĕ. Парти пирĕн транспортшăн питĕ тăрăшать, çакă вăл пире ĕçре хавхалантарать, чугунçула сехет механизмĕ пек тĕрĕс ĕçлеттерессишĕн кĕрешме хавхалантарать.

Я. ИВАНОВ.
Трак разъезчĕн начальникĕ.

ВĂРМАН ХАТĔРЛЕВĔ

Ĕç вăйĕ улшăнсах тăрать

Çĕмĕрлери механизациленĕ вăрманпунктне ĕçлеме кашни кунах сахал мар çынсем пыраççĕ пек туйăнать. Графика пăхсан та çавăн пек: калăпăр, пĕр-пĕр колхозран ĕнер вăрманта пĕр çын та ĕçлемен. Акă, паян унтан темиçе çын килнĕ, хăш участока каймаллине ыйтма конторăна кĕнĕ. Тепĕртак тăрсан тата телефон янраса каять.

— Ку ăçтан?—ыйтать пĕри.

— Мыслецран. Паян 50 çын ĕçлеме килчĕç. Çурри ытла вĕсенчен Элĕк районĕнчен,—илтĕнет сасă.

Статистик паян вăрмана миçе çын ĕçлеме килнине шутлама тытăнать. Часах çакна палăртать: пĕтĕмĕшпе илсен, вăрман хатĕрлевĕнче ĕç вăйĕ хутшăнман, ĕнерхи пекех. Анчах уйрăм районсем, уйрăмăнах ялсоветсемпе колхозсем тăрăх илсен, пысăк улшăну пулса иртни палăрать. Чылай ялсоветсенчен 15—20 çын çĕнĕрен килнĕ.

Кун иртет. Вăрманпунктне каллех сведенисем килеççĕ. Пăхатăн та ун çине, каллех тĕлĕнмелле цифрăсем тухса тăраççĕ. 3—4 кун каялла вăл колхозран 20—30 çын ĕçленĕ пулсан, паян пĕтĕмпе те 5—6 çын çеç юлнă, теприсен кăштах хутшăннă.

Ĕç вăйĕ çакăн пек улшăнса тăни вăрман хатĕрлес плана тултарма питех те чăрмантарать. Ĕç вăйĕ яланах улшăнса тăнă колхозра плана тултарасси япăх пырать. Акă Пояндайкино ялсоветнех илер. Ялсоветри единоличниксем вăхăтран вăхăта çеç вăрмана тухса кураççĕ. Юлашки вăхăтра пачах ĕçлеме пăрахнă. Ялсовет паянхи куна плана çурри те тултарман.

Савадеркино, Тăван, Тукас, Пренеш ялсовечĕсем те вăрман хатĕрлевĕнче япăх ĕçлеççĕ. Хăшпĕр кун вăрманта пулмалли хисепрен ĕçлекенсем çурри те пулмаççĕ. Мартăн 13-мĕшĕнче «Большевик», «Молодая сила», Буденный ячĕпе тăракан, «Заря» колхозсенчен çуран ĕçлекенсем пĕрре те пулман.

Ĕç вăйĕ парса тăрас тĕлĕшпе районсем те çав çавах япăх ĕçлеççĕ. Мартăн 13-мĕшĕнче мехлесопунктра пĕтĕмпе 1055 çын çуран тата 1082 çын лашапа ĕçленĕ пулсан, вăл шутран Çĕмĕрле районĕнчен 964 çын, Элĕк районĕнчен 641 çын, Пăрачкав районĕнчен 56 тата Советски районран 476 çын çеç ĕçленĕ. Урăхла каласан, ĕç вăйĕ парса тăмалли графика нихăш район та пурнăçламан, хăшĕсем (Çĕмĕрле, Элĕк) 50—80 процентран та ытла мар пурнăçланă.

Вăрманта ĕç вăйĕ çитменни—чи пысăк чăрмав. Парти тата совет органĕсен районсенчи руководителĕсен çакăн çине ытларах çаврăнса пăхмалла.

Хар. ЛИСИН.
Çĕмĕрле. **(Хамăр корр.).**

Вăрман хатĕрлес ĕçре халех татăклă улшăну пулмалла

СОВЕТСКОЕ. СССР Совнаркомĕпе ЦК ВКП(б) вăрман хатĕрлевĕнче çуран тата лашапа ĕçлемелли тӳлевлĕ повинность тăвасси çинчен йышăннă постановление вăхăтра пурнăça кĕртес тĕлĕшпе районри чылай колхозсем ĕçе хастарлăн тытăнчĕç. «Сеятель», «Прогресс», «Клевер», Степан Разин ячĕпе тăракан колхозсем вăрман хатĕрлевĕн çулталăкри планне тултарчĕç. Çавăн пекех Сталин ячĕпе тăракан колхоз та хăйĕн планне çак кунсенчех тултарать. Ку колхозра иккĕмĕш бригадăн бригадирĕ ВКП(б) членĕн кандидачĕ Павлов юлташ хăйне çирĕплетсе панă бригадăпа пĕрле тăватă эрне хушши вăрманта ĕçлет. Павлов юлташ вăрманта ĕçлекенсем хушшинче культмассăллă ĕçе аван йĕркеленĕ. Партконференци решенийĕсем çинчен ăнлантарса парать. Çавăн пекех кунта Никифоров ертсе пыракан бригада та (5 çын) 6 кун хушшинче 101,75 кубометр вăрман хатĕрленĕ. Вĕсем кулленхи нормăна ытлашшипех тултарса пычĕç.

Вăрман хатĕрлес ĕç çине сӳрĕккĕн пăхакансем те пур-ха. «Красный Октябрь» колхоз бригадирĕ Гордеев хăйĕн бригадине (4 çынна) 6 кубометр вăрман хатĕрленипех каялла илсе таврăннă. «Труд» колхозра та 5 кубометр çеç хатĕрлеме ĕлкĕрнĕ. Вăрманта ĕçлекенсем хушшинче культурăллă-массăллă ĕçе йĕркелемен, хаçат-журналсем çук. Çав хушăрах вулав çурт заведующийĕсем ялсенче нимĕн тумасăр лараççĕ.

Н. ШУМИЛОВ.

Плана вăхăтра тултаратпăр

Пирĕн колхоза, Çĕрпӳ районĕнчи ытти колхозсемпе пĕрле, вăрман ĕçлеме Буинскри хăма çуракан завод сумне çирĕплетнĕ. Колхозăн 300 кубла метр касса хатĕрлемелле, 180 кубла метр турттарса кăлармалла. Колхозниксем колхоза панă плана çак кунсенчех тултарма тăрăшаççĕ. Ĕç тухăçлăхĕ ӳснĕçемĕн ӳссе пырать. Егор Титов мартăн 11-мĕшĕнче 2,11 кубла метр, мартăн 12-мĕшĕнче 2,31 кубла метр турттарса кăларчĕ. Егоров хăшпĕр кунсенче 2,75 кубла метр турттарса кăларать. Лашапа ĕçлекен ытти колхозниксем те плана ăнăçлăн тултарса пыраççĕ. Çуракине тухасси инçе юлмарĕ, çак кунсенчех лашасене канма тăратмалла. Çавăнпа та ĕнтĕ вăрман турттарса кăларас плана çак кунсенчех тултарма тăрăшатпăр.

Çураннисем 26 колхозник ĕçлеççĕ. Вĕсем те хăйсене панă заданине вăхăтра тултарма тăрăшаççĕ. Нимĕн иккĕленмелли те çук, хамăра панă заданине ăнăçлăн пурнăça кĕртетпĕр.

«Ĕмĕт» колхоз членĕ **С. ТИТОВ.**

Ĕç тухăçлăхĕ ӳссе пырать

ЙĔПРЕÇ. **(Хамăр корр.).** Çĕрпӳ районĕнчен Буинскри хăма çуракан завода йывăç турттарса кăларма килнĕ чылай колхозсенчи колхозниксем пысăк ĕç тухăçлăхĕшĕн кĕрешеççĕ. «Ĕмĕт» колхоз членĕсенчен никам та пĕрре хутласа 1,3 фестметртан кая турттарса кăлармасть. Мартăн 13-мĕшĕнче Е. Титов юлташ пĕрре хутласа 1,74 фестметр илсе тухрĕ.

Лайăх ĕçлекен колхозсене татах та илсе кăтартма пулать. Паваркассинчи «Красный флот» колхоз 180 фестметр вырăнне 220 фестметр турттарса кăларнă. Çураннисем 225 кубла метр вырăнне 191 кубла метр касса хатĕрленĕ. «Красная Павария», «Камай» колхозсем те турттарса кăлармалли плана тултарчĕç.

Хальхи вăхăтра районри чылай колхозсенче вăрманта ĕçлеме çынсем килсе тăраççĕ.

Вăл çапла пулмалла та. Вăрман турттарса кăлармалли плана хăвăртрах тултарса, çуракине тухиччен лашасене канма тăратмалла. Анчах та хăшпĕр колхозсен руководителĕсем çакна ăнланса илесшĕн мар. Тутарла Кăнаш ялсоветĕнчи «КИМ» колхоз председателĕ Платонов юлташ плана тултаринчченех хăйсен колхоз членĕсене киле илсе кайрĕ. Çапла ĕнтĕ вĕсем калле-малле çӳресе лашасене ахалех ывăнтарса çӳреççĕ. Çавăн пекех «Авангард» колхозран килнисем те 7 лашапа 12 кубла метр турттарса кăларнă хыççăн, пăрахса кайнă. «Сталинцы», «Малалла» колхоз членĕсем те плана тултармасăрах киле кайнă.

Кунта Буинскри хăма çуракан заводăн десятникĕсемпе инструкторĕсем кирлĕ пек ĕçлеменнине палăртма кирлĕ. Хăшпĕр десятниксем тунă ĕçсене вăхăтра йышăнмаççĕ е ĕçлемелли çĕнĕ участоксене вăхăтра тупса памаççĕ. Мартăн 13-мĕшĕнче «Ĕмĕт» колхозран килнĕ пĕр звено пĕр участокра ĕçлесе пĕтернĕ хыççăн, тепĕр участокра ĕç париччен чылай хушă ахаль тăнă.

Вăрманта ĕçлекенсем хушшинче культурăллă-массăллă ĕçе туса пымаççĕ. Шăртан ялĕнче кăна 700 çын ытла пурăнать. Вĕсем хаçат-журнал тупса вулаймаççĕ. 10 кун хушшинче колхоз клубне килсе пĕр хут та пулин кино кăтартман.

Садсем ĕрчетеççĕ

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Районри чылай колхозсенче садсем ĕрчетме тытăннă. Шмидт ячĕпе тăракан колхоз виçĕм çул сакăр гектар çĕр çине 1050 тĕп улмуççи лартса хăварчĕ. Кăçал çуркунне лартса хăварма тата 1300 тĕп хатĕрленĕ. Йывăççене çил аптратасран сад йĕритавра 15 пин тĕп ытла тĕрлĕ йывăççем лартнă. Колхозăн хăмла çырли пахчи, питомник пур. Çав питомникре 1200 тĕп улмуççи ӳстереççĕ.

Колхоз кăçал 5 гектар çурă çĕр çинче пахча-çимĕç акса хăварма палăртнă. Пахча-çимĕçсене ир туса илес шутпа вĕсем 0,75 тăваткăл метр çĕр çине парник туса тĕрлĕ пахча-çимĕç вăрлăхĕсене (арбуз, хăяр, помидор, купăста т. ыт. те) халех акнă.

Пахча-çимĕçсем ĕрчетес тĕлĕшпе «Культура» колхоз та аван ĕçлет. Вĕсем 1940 çулта пахча-çимĕç сутса 30 пин тенкĕ ытла тупăш илнĕ. «Культура» колхоз пахча-çимĕçсене вăхăтра шăварса çитĕнтерес тĕлĕшпе виçĕмсулах пысăк пĕве пĕвеленĕччĕ. Халĕ çав пĕверен пĕр талăк хушшинче 2000 литре таринччен шыв саптарма пултаракан насус илнĕ.

Колхоз çак пĕвене карас пулă янă пулнă. Кăçал колхозниксем хăйсем тытнисĕр пуçне, виçĕ пин тенкĕлĕх пулă сутнă. Халĕ татах пулăсем яма шухăшлаççĕ.

„Нарспи" пьесăна куракансен хисепĕ пысăк

Ĕнер Чăвашсен Государство Академин театрĕ «Нарспи» пьесăна лартма тытăнчĕ. Вăл пьесăна курас текенсен йышĕ çавтери пысăк. Мартăн 17-мĕшĕнче театр касси пĕр кун хушшинче мартăн 18—19-мĕшсем валли билетсене пĕтĕмпех сутса пĕтернĕ.

Шупашкар районĕнчи çыхăну конторинче ĕçлекенсем «Нарспи» пьесăна коллективпа кайса курма билет илнĕ. Çавăн пекех, Ишлей тата Шупашкар районĕсенчи колхозсем те билетсем ыйтса заявкăсем панă.

Шахмат турнирĕ пулса иртрĕ

Пирĕн №-лĕ чаçри красноармеецсем çак кунсенче шахмат турнирĕ туса ирттерчĕç. Ку турнира Чăваш республикинчен килнĕ красноармеецсем те хутшăнчĕç.

Вăрнар районĕнчен килнĕ И. Григорьев юлташ шахмат турнирĕнче пĕрремĕш вырăна тухрĕ.

УССР. **А. ТОЛСТОВ.**

ТӲРЛЕТНИ

«Наука енĕпе тунă калама çук чаплă ĕçсемшĕн Сталинла премисем парасси çинчен» СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1941 çулти мартăн 13-мĕшĕнче йышăннă постановленире, медицина наукисен разделĕнче, иккĕмĕш степеньлĕ премисем çинчен калакан пайра **çакăн пек пичетленнĕ:**

«2. Александр Евсеевич **Браунштейна,** Экспериментальнăй Медицинăн Горький ячĕпе тăракан Пĕтĕм Союзри Институчĕн профессорне, «Образование и распад аминокислот путем интермолекулярного переноса аминогруппы» ятлă научнăй ĕçшĕн, вăл 1937 — 1940 çулсенче пичетленсе тухнă».

Ăна çапла вуламалла:

«2. Александр Евсеевич **Браунштейна,** Экспериментальнăй Медицинăн Горький ячĕпе тăракан Пĕтĕм Союзри Институчĕн профессорне тата Мария Григорьевна **Крицмана,** çав Институтăн научнăй сотрудникне, медицина наукисен кандидатне, «Образование и распад аминокислот путем интермолекулярного переноса аминогруппы» ятлă научнăй ĕçшĕн, вăл 1937—1940 çулсенче пичетленсе тухнă».

Лекци

Паян, мартăн 19-мĕшĕнче, ВКП(б) Шупашкар горкомĕн парткабинетĕнче ВКП(б) историйĕ çинчен вулакан лекцисен циклне итлекенсем валли **«Работа В. И. Ленина «Материализм и эмпириокритицизм» и защита теоретических основ марксисткой партии»** темăпа тӳлевлĕ лекци пулать (иккĕмĕш лекци). Лектор — **Суслов** юлташ.

Лекци каçхине 8 сехетре пуçланать.

ПАРТКАБИНЕТ.

Шкулсенчи пĕлӳ тĕрĕслевне ирттерме хатĕрленесси

Шкулсем вĕренӳ çулĕн чи ответлă тапхăрне кĕчĕç. Пĕлӳ тĕрĕслевĕсем пуçланасси икĕ уйăха яхăн юлчĕ. Вăхăт çывхарса килет. Çавăнпа халĕ ĕнтĕ, çĕнĕ материалсене вĕреннĕ май, малтан вĕреннисене те аса илесси, вĕренӳре кая юлса пыракан ачасене уйрăм пулăшу парасси—учителĕн кулленхи ĕçĕнче пысăк вырăн йышăнса тăмалла. Ку ĕçе кашни учителĕн план тăрăх туса пымалла. Тепĕр енчен, кашни уйрăм ачан пĕлӳне, вăл ача программăн хăш пайĕнче начар пĕлнине пĕлсе тăни кирлĕ.

Повторени — шкулшăн тата уйрăм учительсемшĕн ответлă ĕç пулса тăрать. Çавăнпа ку ĕçе тĕплĕн шухăшласа туса пымалла. Предметăн хăш пайĕ ачасемшĕн ăнланма йывăртарах пулнă, повторенине çав пайсенчен пуçламалла, ун çинче ытларах чарăнса тăмалла. Хальхи вăхăтра повторенине, çĕнĕ материала вĕреннĕ май, кашни урокрах туса пырас пулать. Май уйăхĕн пуçламăшсенче çĕнĕ материала вĕренсе пĕтермелле, вара çав вăхăтран тытăнса, тăтăшах повторени туса ирттермелле.

Вĕренӳ çулĕ пĕтнĕ май, инструкци тăрăх, вĕренекен ачана вĕренӳ çулĕн тăватă чĕрĕкĕсенче илнĕ отметкăсене те хисепре тытса, çулталăкри отметка лартса памалла. Вĕренекен ача тĕп дисциплинăсемпе «плохо» отметка виççĕрен ытла илсен, тĕрĕслеве тăраймасть. Çакна учительсен тата вĕренекенсен те асрах тытас пулать. Вĕренекен ачасен пурин те тĕрĕслеве тăма хатĕрленмелле. Повторени вăхăтĕнче тимлесе вĕренсен, шкул ачи материала тĕплĕнтерех ăнланма пултарать. Ку ĕçе учительсен организацилемелле. Пĕр ача та тĕрĕслеве тăмасăр ан юлтăр. Повторени ĕçне тĕрĕслев çук предметсемпе те организацилес пулать. «Ку предметпа тĕрĕслев çук, çавăнпа ăна аса илсе тепĕр хут çирĕплетме те кирлĕ мар», тесе шухăшлакан ачасем те тĕл пулкалаççĕ шкулсенче. Кун пек шухăшлани — пĕртте тĕрĕс мар.

Шкулсенче вĕренӳ тĕрĕслӳне кăçал кăна мар туса ирттеретпĕр. Кăçалхи инструкцире те тĕрĕслеве мĕнле майсемпе ирттересси çинчен тĕплĕн кăтартса панă, ун çинчен çырма та кирлĕ мар пек туйăнать. Анчах, пĕр енчен, пирĕн учительсем хушшинче нумай мар вăхăт ĕçлекенсем чылай, тепĕр енчен, чылай ĕçлекен учительсемех хăшпĕрисем, тĕрĕслев ĕçĕн ответлăхне туймасăр, çителĕклĕ хатĕрленменнипе тата ĕçе çиелтен тунипе иртнĕ çулти тĕрĕслев ĕçĕнче пысăк йăнăшсемех турĕç.

Кăçалхи çул çав йăнăшсене тепĕр хут тăвас мар тесен, вĕсем çинчен асăрхаттарни кирлĕ. Эпир кунта иртнĕ çулта пирĕн Элĕк районĕнчи шкулсенче пулнă йăнăшсенчен хăш-пĕрисене илсе кăтартасшăн.

Инструкци тăрăх, тĕрĕслев ирттермелли билетсене учителĕн 10 кун малтан директор е заведующи аллине памалла. Билетсен пахалăхне пăхса тухса, шкул заведующийĕсем хăйсен аллинче усраççĕ, тĕрĕслев кунĕ учителе параççĕ. Çак йĕркене иртнĕ çулта пăснисем пулнă: хăшпĕр учительсем билетсене тĕрĕслев ыран тенĕ чухне тин çырнă, чылай шкулсенче билетсем учительсен аллинчех пулнă (ку та йăнăш ĕнтĕ). Васкаса çырнипе билетсем çинчи ыйтусене йĕркеллĕ тăвайман. Сăмахран, Вутлан шкулĕнче (учитель Иванов юлташ) пĕр билет çине çакăн пек ыйту çырнă: «Англинче **мĕнле çĕр айĕнче** пурлăхсем пур?» Ку ăнсăртран пулнă йăнăш мар: тепĕр билет çине каллех: «США-ра **епле çĕр айĕнчи** пурлăхсем пур?»—тесе çырнă. Вăлах «Африкăри юхан шывсем» ыйтăва икĕ билет çине çырать. Пĕр ыйтăвах иккĕмĕш хут тухсассăн ачасем: «Ку ыйту икĕ хут тухрĕ», тесе учителе систерчĕç. Çак билетсен пахасăрлăхĕ çинчен калама та кирлĕ мар. Учитель вĕсене нимĕн шутламасăр, çиелтен кăна тата чăваш чĕлхине мăкăлтаса çырса хунă, — йăлине кăна тунă. Билетсем çинчи ыйтусене программăн тĕрлĕ пайĕсенчен илсе, ачасене тăнланмалла тата чăваш грамматикипе килĕшӳллĕ çырмалла.

Пиçенерти пуçламăш шкулти учитель тĕрĕслев кунĕ ирхине ассистент пыриччен класри ачасене пурне те билетсем парса тухнă, ачасем вара билетсем çинчи ыйтусене ответлеме хатĕрленсе ларнă. Çакна ассистент вăхăтра пыман пирки тунă (ассистент кӳршĕри шкултан пулнă). Вутлан шкулĕнче те географипе тĕрĕслев ирттернĕ чухне ассистент пулман. Ку ĕнтĕ инструкцине пăсни пулать. Пĕр учитель те тĕрĕслеве ассистентсăр ирттерме пултараймасть, çавăнпа ассистентсене малтанах палăртса хурса, вĕсене инструктаж памалла. Билетсене класри ачасене пĕтĕмĕшпех парас пулмасть. Пĕр парттăна маларах сиктерсе лартса, ун çине ачасене икшерĕн е виççерĕн кăларса лартмалла, вара вĕсем хăйсем билетсем илсе, çав билетри ыйтусене ответлеме хатĕрленеççĕ. Кĕнеке е малтан çырнисем пулмалла мар. Таса хутпа карандаш памалла, ача хăйне тивнĕ ыйтусем çине ответлеме хатĕрленсе çырма пултарать.

Тĕрĕслев çырăвĕ ирттернĕ чухне те инструкцинчен пăрăнса ĕçленисем пулнă (изложени текстĕ тăрăх класра план туса пани, текста чылай хут вулани тата диктант ирттернĕ чухне пĕрер сăмахăн каласа çыртарни). Диктанта е изложенине мĕнле йĕркепе ирттересси çинчен «Виды проверочных письменных работ по русскому языку и нормы оценки их в нерусских школах РСФСР» ятлă методикăллă кăтарту шкулсенче пур, çав кăтартупа усă курас пулать. 5-мĕш тата 6-мĕш классенче тăван чĕлхепе диктант çырмалли текстсене учитель хатĕрлет. Текст ачасене тăнланмалла тата уйрăм классенче сăмах йышĕ çакăн чухлĕ пулмалла: 5-мĕш класра—110 сăмах, 6-мĕшĕнче—130. Хак парассине Наркомпрос 1940 çулта кăларнă «Нормы оценки успеваемости учащихся» ятлă брошюрăпа усă курса туса пымалла.

Çыру ĕçĕсене тĕрĕсленĕ чухне хăшпĕрисем ятне кăна туни курăнать. Ун пек учительсем ачасен йăнăшĕсене палăртмасăр хăвараççĕ. Ку ĕнтĕ ниме юрăхсăр ĕç. Ун пек «ĕçленипе» вĕренекенĕн тата класăн пĕлӳне тĕрĕссĕн пĕлме çук. Тĕслĕхрен, Йӳçкасси шкулĕнче тăван чĕлхепе 7-мĕш класра Егоров учитель тата ассисетент Харитонов юлташ 6 ача ĕçĕсенче кашнинчех иккĕрен пуçласа ултă таран йăнăшсем хăварнă, çапла хăшпĕр ачасем тивĕçлĕ мар çĕртенех пысăкрах отметкăсем илнĕ. Егоров юлташ тĕрĕсленипе 24 ачаран 79,2 проценчĕ лайăх çырнă, институтра тĕрĕсленĕ тăрăх—54,1 процент кăна тухать.

Тĕрĕслӳ вăхăтĕнче ачасем пĕр-пĕринчен çырса ан илччĕр тесе асăрхас пулать. Тата тĕрĕслӳ ирттернĕ чухне шкулсем ачасен ашшĕ-амăшĕсемпе çыхăну тытни кирлĕ.

Шкулсенче тĕрĕслӳве ăнăçлăн ирттерме пур учительсен те инструкципе тĕплĕн паллашса, çак ответлă ĕçе ирттерме малтанах хатĕрленсе пымалла.

Арс. ЗОЛОТОВ.

Ответлă редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

ЧУВАШСКИЙ РЕСПУБЛИКАНСКИЙ
КОМИТЕТ ПРОФСОЮЗА НСШ
(Чебоксары, Дом Союзов)
ПРОДАЕТ ПУТЕВКИ
НА КУРОРТ
КИСЛОВОДСК
сроком с 1 апреля и 26 апреля, цена путевки 728 рублей.

СООБЩАЕТСЯ ДЛЯ СВЕДЕНИЯ
УЧЕБНЫХ, СОВЕТСКИХ, ПАРТИЙНЫХ, ПРОФСОЮЗНЫХ, КООПЕРАТИВНЫХ ОРГАНИЗАЦИЙ И ВСЕХ ПРЕДПРИЯТИЙ ЧУВАШСКОЙ АССР, ЧТО
ЧУВАШСКАЯ ПРОМКАССА
РАСПОЛАГАЕТ ПУТЕВКАМИ
на сезон 1941 года в дом отдыха им. 12 лет ЧАССР.
В текущем сезоне намечены значительные улучшения культурного и здорового отдыха.
Спешите с подачей заявок и заключением договоров на приобретение путевок.
Дом отдыха начинает функционировать с 10 мая с 11-дневным пребыванием.
СТОИМОСТЬ ПУТЕВКИ 200 РУБЛЕЙ.
Справляться по адресу: Чебоксары, Калинина, 40, телефон 2-10.
3—1

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—67, редактор заместителĕн—3—97, редакци секретарен — 4—40, пропаганда пайĕн —4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, экономика пайĕн — 0—88, çырусемпе рабселькорсен пайĕн—2—30, «Ĕçхĕрарăмĕ» журналăн—5—23, «Ленин çулĕпе» журналăн—0—85, издательство конторин—0—23.
НТ 2700. Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии Чувашской АССР. Заказ № 191. Ф. Б. 58×84 п. л.